Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 3 ЕРНЕКУН 276 (4788)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Колхозсенче тырпулсемпе тупăшсене валеçесси çинчен

ПСК(б)П Обкомĕпе ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ республикăри колхозсенче тырпулсемпе тупăшсене валеçесси чăтма çук вăраха карĕ, тесе шутлаççĕ. Куншăн районсенчи ĕçтăвкомсем, çĕрĕç пайĕсем, МТСтанцисем, çавăн пекех тата колхоз правленисем айăплă.

Тупăшсене валеçессине малашне чарса тăма пачах йурамаст. Пур районсенчи колхозсенче те халех колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрăх тупăшсене валеçес ĕçе организацилемеле.

Партипе совет влаçĕ—колхозниксем кăçал вăйлă тырпул туса илччĕр тесе мĕн тумалисене пурне те турĕç, колхозсене тракторсем, комбайнсем тата ытти машинсем пăрса пулăшрĕç. Правительствă колхозсене таса суртлă вăрлăх тата удобренисем пачĕ. Пирĕн республикăри колхозсем те, пĕтĕм çĕршыври колхозсем пекех, халиччен курман тырпул туса илчĕç. Кунсăр пуçне, пирĕн республикăри колхозсене партипе правительствă питĕ пысăк ђготăсем пачĕç. Çаксем пурте колхозсене нумай тырă тытакан, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырă тата укçа нумай пама пултаракан турĕç.

Тупăшсене валеçесси—политикăла питĕ пысăк ĕç, çавăнпа та парти организацисемпе советсен çак ĕçе хăйсен аллине илмеле. Тупăшсене валеçес ĕçе çитес 1938 çулта тата вăйлăрах тырпул туса илес, колхозсенче стахановла йухăма малала сарса пырас, ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавне лайăх иртерес тесе политикăла кампани туса иртермеле.

Тырпулпа тупăшсене валеçессине йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕнчи 15 пункчĕпе çирĕппĕн килĕштерсе иртермеле, унта лайăх ĕçлекен бригадăсене хушса пама, начар ĕçлекенсенчен чакарса хăварма кăтартса панă.

Çĕре мĕнле пăхмалин паха тĕслĕхĕсене кăтартса панă стахановла звеносем тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре кăçалхи çул питех те пысăк выран йышăнса тăчĕç. Вăйлă тырпул туса илекен стахановла звеносен ĕçне пур йенчен те тивĕçлипе хак хурса пахаламала. Кашни колхозăн çак звенисемпе вĕсен руководителĕсене пысăк пахалăхла ĕçшĕн тата вăйлă тырпул туса илнĕшĕн ĕçкунĕсем шутласа пырас ыйтăва уйрăмăн сÿтсе йавмала.

Тупăшсене валеçнĕ чух ĕçкунĕ çине укçан парассине ытларах ÿстермелине уйрăмах асăрхаса пăхмала. Кăна тума нумай колхозсен пур майсем те пур, йĕтĕн тата кантăр акса тăвакан колхозсем, çавăн пекех, клевĕр вăрлăхĕ акса тунă тата выђăх-чĕрлĕх ĕрчетекен пысăк фермăсем тытакан колхозсем ку тĕлĕшпе уйрăмах лайăх выран йышăнса тăраççĕ.

Çав шутпа колхозсен укçа-тенкĕ сметисене тепĕр хут пăхса тухмала, аппарат тытма тата административлă-хуçалăх йенĕпе тухнă мĕн пур ытлашши расхутсене, уставра кăтартнă нормăран иртекен ытти тĕрлĕ расхутсене пĕчĕклетмеле, вĕсене ĕçкунĕпе валеçнĕ çĕре йамала.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ районри çĕрĕç пайĕсене, МТС директорĕсене тата колхоз правленийĕсене кашни колхозник ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсене мĕнле çырнине халех тĕрĕслесе тухма хушать, устав кăтартнă тăрăх „кашни ертел членĕ ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсене çырса кÿртнĕ ведăмăçа ертел тупăшĕсене валеçессине çирĕплетекен пĕрлехи пухуpуличчен икĕ ерне малтан мĕн пур халăх курмала çĕре тухса çапмала".

Тырпулпа тупăшсене валеçме пуçличчен ревизи комиççисен колхоз правленисен пĕтĕм финанс ĕçне тата колхозниксене ĕçкунĕсем тĕрĕс лартса панине тĕрĕслесе тухмала.

Тырпулпа тупăшсене валеçесси çинчен колхозниксен пĕрлехи пухувĕсенче обязательнă йĕркепе сÿтсе-йавмала.

Районри çĕрĕç пайĕсем тата МТС-сем тырпулпа тупăшсене валеçес ыйтăва сÿтсе-йавнă çĕрте хутшăнса ĕçлеме колхозниксен пĕрлехи пухувĕсене хăйсен представителĕсене йамала.

Тырпулсене тата тупăшсене валеçнĕ чухне колхозăн, йĕтĕнпе кантăр тирпейлес ĕçре ĕçлекен колхозниксем тырпула валеççе пĕтернĕ хыççăн тунă ĕçкунĕсемшĕн тÿлеме, тырпулран пĕр пайне уйăрса хăвармала.

Тырпулсемпе тупăшсене хăвăртрах валеççе пĕтерес тĕлĕшпе, колхоз правленийĕсене çак ĕçсене тума хушас:

а) çитес кунсенчех государствăна тырпул тăратассине, ссудăсене тавăрса парассипе МТС-сем ĕçленĕшĕн натурплатă тÿлессине туса пĕтермеле;

б) 1938 çулхи çуркунне акма кирлĕ вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех хывса çитермеле;

в) лашасене тата пĕрлештернĕ ытти выђăх-чĕрлĕхе тăрантарма кирлĕ фураж фондне уйăрса хумала;

д) уставра кăтартнă тăрăх хывмали вăрлăхпа фураж тата страховой фондсене хывмала.

Тырпулсене валеçнĕ чухне инвалидсене, старисене, вăхăтлăха ĕçлейми пулнисене, красноармейецсен семйисене пулăшма кирлĕ фонд тумалине, ача йаçлисемпе тăлăх-туратсене тытса тăма кирлĕ фонд тумалине, вăл фонд валовой продукцин 2 процентĕнчен ытла пулмала маррине, шута илмеле.

Колхоз правленисене пурне те ăнлантарса парас: 1937 çулшăн тырпул валеçнĕ чухне колхозниксене шутласа паракан ĕçкунĕсен шутне тупăшсене валеçнĕ кун тĕлне тунă йалхуçалăхĕнчи пур тĕрлĕ ĕçсене те кĕртмеле.

Тырпулсемпе тупăшсене республикăра 1937 çулхи декабĕрĕн 20 мĕшĕнче валеççе пĕтермеле тăвас, çак майпа Çĕрĕç халăх комиссариачĕпе райĕçтăвкомсене тырпулсене декабĕрĕн 10 мĕшĕчен çаптарса пĕтермеле тума хушас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ чукунçул тунă çĕрте ĕçленĕшĕн ĕçкунĕсем шутласа памала маррине тата тепĕр хут асăрхатараççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çакна уйрăмăнах палăртаççĕ—тырпулсемпе колхоз тупăшĕсене валеçесси вăл—йалхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе çитерекен çав тери пысăк политикăлă кампани. Тырпулсемпе укçа-тенкĕ тупăшĕсене валеçес ĕçпе колхозниксен массисене 1938 çулхи çуракине тимлĕн хатĕрленес ĕçе анлăн сарса йама хутшăнтарас çĕрте усă курмала.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. Спасов.
ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ Г. Иванов.

Чаплă трактористкăшăн—Пашă Ковардакшăн

Йейск хулинчи суйлавçăсен митингĕнче

ЙЕЙСК, декабĕрĕн 1-ш (ТАСС). Краснодар крайĕнчи Йейск хулинче суйлавçăсен умĕнхи митинг пулса иртнĕ. Вăл митингра 11 пин суйлавçă пулнă. Митингра Союз Советне депутата суйламали кандидат, Канеловски машинă-тракторлă станцин орденоносец-трактористки, халĕ Тимирйазев йачĕпе тăракан йалхуçалăх академинче вĕренекен Прасковйа Ивановна Ковардак сăмах тухса каланă.

Союз Советне депутата суйлама тăратнă кандидат П. И. Ковардак йулташ çапла каланă:

— Сире, хаклă йулташсем, мана шаннăшăн пĕтĕм чĕререн тав тăватăп. Ăна ĕçпе тавăрма тăрăшатăп. Пире аслăран та аслă руководитель, йуратнă çулпуç Иосиф Виссарионович Сталин мĕнле вĕрентет, çавăн пек тăрăшса вĕренĕп тата ĕçлĕп. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Епĕр Сталинла Конституци пуррипе, Сталинла тапхăрта пурăннипе телейлĕ. Сталин йулташ пире телейлĕ, савăнăçлă пурнăç патне илсе килчĕ.

Совет кĕрарăмĕ савăнăçлă пурăнать, унăн умĕнче пур çул та уçă: вăл—ђотчик, вăл—инженер, вăл—тракторист, вăл—агроном, вăл—врач. Ĕç, канăç, вĕренÿ прави, суйламали тата влаç оргăнĕсене суйланмали права—çаксем пурте хамăр кĕрешсе илнисем, вĕсене пурне те пире хамăрăн йуратнă çулпуç Сталин йулташ панă.

Епĕ кĕтÿç, тĕттĕм тата хутла пĕлмен хĕр пулнă, совет влаçĕнче, колхоз стройĕнче трактористкă пултăм. Мана пысăк ĕç шанса пачĕç. Халь епĕ академире вĕренетĕп. Машинасене йĕртсе пыракан ман пек хресчен хĕрĕсем нумай ĕнте, вĕсем колхоз уйхирĕсенче стахановла ĕçлеççĕ.

Тăшман пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнсан, епĕр тракторсемпе комбайнсем çинчен вăрçă машинĕсем çине ларса хамăр кĕрешсе илнисене хĕçпăшалпа сыхлăпăр.

Сывă пултăр ССР Союзĕн çĕнĕ Конституцин аслă творецĕ—пирĕн хаклă, йуратнă Иосиф Виссарионович Сталин! (Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Ура" кăшкăрнисем илтĕнеççĕ. Сталин йулташа асăнса ăшран хаваслансa кăшкăраççĕ).

Суйлав округĕсем тăрăх

Солдатскайа станицă халăхĕ (Кабардино-Балкар АССР-чи Прохладненски суйлав округĕ) Национальнăçсен Советне депутата суйламали хăйсен кандидатне—Совет Союзĕн Геройне Анатоли Васильйевич Ђапидевскине хĕрÿлĕ саламлать. Митинга станицăри пĕтĕм халăх—тăватă пин ытла çын тухнă. Митинг хыççăн колхозниксем хăйсен кандидатне чысласа хаваслă апатлану туса иртернĕ. Ђапидевски колхоз клубĕнче вечерта пулнă.

Куйбышев облаçĕнчи, Чапайев районĕнчи ĕççыннисен суйлав умĕнхи пин те пилĕкçĕр çынлă канашлувĕнче Союз Советне депутата суйламали кандидат—йулашки çулсенче Сталин йачĕпе тăракан Шурă тинĕс—Балти каналĕн тата Мускав—Атăл каналĕн строительствисенче ĕçленĕ, халĕ Куйбышеври гидроузел строительстви начальникĕ С. Йа. Жук йулташ сăмах тухса каланă. Ăна суйлавçăсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

„Атăл çинче çĕнĕ, калама çук пысăк гидроенерги узĕлĕ туни,—тенĕ Жук йулташ,—РСФСР-ĕн вăтаçĕрти пайне типĕ çанталăклă районран чечекленекен край, тĕнчере тулă акса тăвакан чи лайăх центр туса хурать. Атăл тăрăхĕнчи çĕр пер пин гектар çĕре Атăл шывĕпе шăварма май пулать".

Краснодар крайĕн Баград районĕнчи Буденновски суйлав участки валлыи пиĕ лайăх çурт уйăрса панă. Кунта сасăламали пÿлĕм улттă тăваççĕ. Суйлавçăсем валли сасăлама кĕриччен кĕтсе ларма аслă, çутă зал тата ача пăхасем валли пÿлĕм хатĕрленĕ. Стенасем çинче лозунгсем, плакатсем, партипе правительствă руководителĕсен портречĕсем, Совет Союзĕн карттипур.

Сталински чукунçул çинче ĕçлекен рабочисем Сталинла Конституцине йышăнни çулталăк тултарнă куна тата ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали куна кĕтсе илме тивĕçлĕ хатĕрленеççĕ. Мускав—Днепропетровск çулпа хăвăрт чупакан пойăса илемлетеççĕ. Пойăсăн составне пĕтĕмпех радио кĕртеççĕ. Çул çинче пассажирсем радио тăрăх Пĕтĕм Союзри Советсен 8-мĕш Чрезвычайлă Съезĕнче Сталин йулташ тунă доклада тата Молотов йулташ сăмахне итлеççĕ.

(ТАСС).

„Епĕр хамăр çĕнтерессе нихăçанхинчен ытларах шанса тăратпăр"

Долорес Ибаррури зайавленийĕ

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Францири „Се суар" хаçат, унăн редакторне—Арагона Париже пынă Долорес Ибаррури панă зайавленийе пичетлесе кăларнă.

Долорес Ибаррури çапла пĕлтернĕ: епĕ Париже, Испанири халăх фрончĕн делегацийĕпе пĕрле, француз халăхне Испанири чăн-чăн лару-тăру çинчен пĕлтерме килтĕм, тенĕ.

„Епĕр, хамăр çĕнтерессе нихçанхинчен ытларах шанса тăратпăр,—тенĕ Ибаррури йулташ.—Испани халăхĕ пĕтĕçÿлĕ, вăл тÿсекен йăварлăхсем пирĕн пĕрлĕхе куллен кун çирĕплентерсе пыраççĕ. Социалиссем тата коммунисем пĕрлĕхлĕ пулса ĕçлени халĕ халичен пулнинчен нумай çирĕпрех. Республикă çарĕсем Çурçĕрте ăнăççăрлăх тÿснĕ пулин те („хутшăнмала мар" текен политикă çĕршывăн çурçĕр йенне пĕтĕмпех уйăрса хучĕ), çав ăнаççăрлăха пула тăшман хăйĕн вăйĕсене ытти фронтсенче пухма май илчĕ пулин те, вăрçă тĕлĕшпе халь республикăн лару-тăрувĕ нихçанхинчен те лайăхрах. Халĕ ĕнтĕ пирĕн ку чухнехи техникăпа хĕçпăшалланнă çар, пĕрлĕхлĕ çар пур, пирĕн çарăн халăх хушшинчен тухнă, халăхшăн шанчăклă çулпуçĕсем пур, çулталăк çурă ĕçлесе опыт пухса хатĕрленнĕ çар пур. Пĕтĕм Испани халăхĕ вăйа хурса геройла ĕçлевипе вăрçă промышленнăçне тунă, вăл пире çара валли кĕрешме мĕн кирлисене парса тăма май парать".

Ибаррури йулташ хăйĕн зайавленине республикăла Испанийе пĕтĕм тĕнче пулăшу пани кирлĕ, тесе вĕçленĕ. „Хăвăртрах çĕнтерсе пирĕн халăха хĕнхуртан хăтарма, çавăн пекех тата Гитлерпа Муссолини, Испанире çĕмĕрсе тăкнăскерсем, ытти çĕршывсенче вăрçă вутне чĕртсе ан йарăйччĕр тесе, пире пĕтĕм тĕнчерен пулăшу кирлĕ", тенĕ Долорес Ибаррури.

(ТАСС).

Фашисла Германире апат-çимĕçсем сахалланса пыраççĕ

БЕРЛИН, 28 XI (ТАСС). Германире апат-çимĕçсем тĕлĕшпе лару-тăру çивĕчленсех пырать. Çавна май фашиссен правительстви—апат сахалрах çийĕр, апат-çимĕçе „тирпейлĕ", „перекетлĕ" тыткалăр, текен циркуђарсем кăларать. Геринг Гамбург хулинче пысăк сăмах тухса каланă, вăл хăйĕн çав сăмахĕнче—сăкăр сахалрах çийес пулать, тенĕ.

Германире сысна айисен хисепĕ тĕлĕнмеле хăвăрт чакса пырать, çавăн пирки кăçалхи çул çуркунне тата çула сысна какайĕ тупса илме йăвăр пулса çитет.

Йалхуçалăх тата апат-çимĕç министерствисен йулашки циркуђарĕ халăхăн декабĕр уйăхĕнче мĕн çисе пурăнмали çинчен калать. Циркуђарта кăтартса панă тăрăх, 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче халăхăн пуринчен ытла çĕрулми, брÿква, сĕлĕ çăнăхĕ, пăрçа, йасмăк, сĕт порошокĕ, исскуственнăй пыл, пула çисе пурăнмала мĕн. Ÿсен-тăран çăвĕсем, ытти çусем те, сысна какайĕ т. ыт. те малашне те виçеллĕ çеç паракан продуктăсем шутланаççĕ.

Информацилĕ пĕлтерÿ

Нойабĕрĕн 29-мĕш — декабĕрĕн 1-мĕш кунĕсенче ПСÇЛКС Обкомĕн иккĕмĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çак ыйтусене сÿтсе йаврĕ:

1) ПСК(б) Парти Обкомĕн IV-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен, 2) ПСÇЛКС облаçри XIV-мĕш конфернцийĕ ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавне хатĕрленес йенĕпе йышăннă решенисене йеплĕ пурнăçлани çинчен тата 3) Организацилĕ ыйтусем.

Пленум И. П. Прохоров йулташа Обкомăн вĕренекен çамрăксен пайĕн пуçлăхĕнчен хăтарчĕ, ПСÇЛКС Обком бÿровĕпе пленум членĕсен составĕнчен кăларчĕ. Çавăн пекех ПСÇЛКС Обком бÿровĕпе пленум членĕсен составĕнчен Г. В. Андрейев йулташа кăларчĕ тата ăна „Çамрăк большевик" хаçат редакторĕнчен хăтарчĕ. Пленум членĕсен составĕнчев С. П. Петрова, З. А. Алексейевана, К. И. Чихинова, В. Степанована тата М. Николайева кăларчĕ; пленум членĕн кандидачĕсен составĕнчен В. П. Гуçкова кăларчĕ.

Пленум ПСÇЛКС Обком секретарĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма К. М. Арзамасцев йулташа, иккĕмĕш заместителĕ пулма А. А. Баранов йулташа суйларĕ.

Водопйанов йулташ отрйачĕ Мускавра

Совет Союзĕн Геройĕ Водопйанов йулташăн вĕçев отрйачĕ нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Мускава Рудольф утравĕ çинчен таврăннă.

Вĕçевре пулнисене Фрунзе йачĕпе тăракан тĕп аеродромра Çурçĕр Тинĕс çулĕн тĕп тытăмĕн начальникĕ О. Й. Шмидт, вĕçевре пулнисен тăванĕсем, Çурçĕр Тинĕс Çулĕн тĕп тытăмĕн работникĕсем, пичет представителĕсем тĕл пулса илнĕ.

(ТАСС).

ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ тĕлне ИЗОГИЗ кăларакан Н. Жуков художник плакачĕ.

(Союзфото репродукцийĕ).

Пĕрремĕш павилйон

(Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче)

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставки выранĕнче малтанлăха хатĕрлесе çитернĕ пĕрремĕш павилйона уçнă. Ку—çулă, ефирлă-çулă тата емеллĕ куђтурăсен павилйонĕ.

Павилйона икĕ зала уйăрнă. Тĕп залра 1936 çулта туса илнĕ куђтурăсен експоначĕсене пухнă. Вăл експонатсене выставкăна социалисăмла йалхуçалăхĕнче малта пыракан 80 колхоз тăратнă. Илемлетсе тунă стендăсенче 12 çулă куђтурă—хĕвелçаварнăш, клешчевинă, сафлор, арахис, кунжут, йĕтĕн-кудрйаш т. ыт. вăррисене вырнаçтарнă. Кунта халĕ Совет Союзĕнчи çулă куђтурăсен вăррисене 36 сурт тăратнă.

Вăрă образецсемпе йунашар вăл вăрăсенчен туса илнĕ пур çусене те кăтартнă.

Сулахай йенчи стена тăрăх Совет Союзĕнче çулă куђтурăсене мĕн чухлĕ акнине кăтартакан диаграммăсем, картограммăсем, панносем. Вĕсемпе йунашар чи лайăх стахановецсен, çулă куђтурăсен пысăк пахалăхла сурчĕсене тата пурне те тÿсекен хĕвелçавăрнăш туса илнĕ Жданов, Пустовойт т. ыт. паллă селекционерсен фото-портречĕсем çакăнса тăраççĕ.

Стендăсем тавра хĕвелçавăрнăш, клешчевинă т. ыт. експонатсене, вĕсем мĕнле ÿссе çитĕннĕ, çаплипех тăратса тухнă.

Выставкăна тăратнă материалсем çулă куђтурăсен производствине механизацилессинчи пысăк çитĕнÿсем çинчен уççăн кăтартса параççĕ. Çулă куђтурăсем çинчи çумсене çумлассине тата купалассине халĕ тракторпа тăваççĕ.

1936 çулта пулса иртнĕ МТС-сен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕнче мала тухнă, чи лайăх ĕçлекен Гулай-Польскри МТС-ĕн (УССР) ĕçĕсене кăтартакан експонатсене хисеплĕ выран уйăрса панă.

Çулă куђтурăсен уйрăмĕпе йунашар ефирлă-çулă куђтурăсен уйрăмĕ. Ку уйрăм колхозсем çĕнĕ куђтурăсем акса тăвассипе тунă пысăк çитĕнÿсене çутатса парать. Революциччен пирĕн ефирлă çулă куђтурăсем кореандр, анис, мйатă тата фенхель çеç пулнă. Халĕ пирĕн 22 ефирлă-çулă куђтурăран—лавандăран, гераньрен т. ыт. те çу тăваççĕ.

Вĕсем хаклă суртлă парфÿмери тума хаклă ефирлă çусем параççĕ. Çак пĕтĕм тĕрлĕ куђтурăсене хăйсем мĕнле ÿссе çитĕнне çаплипех тата вĕсенчен туса илнĕ парфÿмерине вырнаçтарса тухнă.

Патша Российĕ хăй тĕлĕн ÿсекен емеллĕ курăксене çеç пĕлнĕ. Революциччен емеллĕ курăксене акса тумали плошчĕд 60 гектар çеç пулнă, халĕ вăл 2 300 гектара çитет.

Емеллĕ курăксен уйрăмĕ павилйонра ССР Союзĕнче емеллĕ куђтурăсене акса тăвасси вăйлăн ÿссе пыни çинчен кăтартакан пуйан материал парать.

Ĕлĕк пирĕн патăрта ÿсмен емеллĕ курăксене те—долматскайа ромашка, камфорный базилик т. ыт. те халĕ акса тума пуçланă.

Совет Союзĕнче акса тăвакан чĕрĕ емеллĕ курăксен ассортиментне те лайăх суйласа илнĕ.

Хăйсем тĕлĕн ÿсекен тата куђтурлă емеллĕ курăксем ăçта ÿснине кăтартакан картă павилйона курма пыракансене пысăк тимлĕхпе пăхтарать.

Павилйон варринче тутлă шăршлă, сăрлă шыва сирпĕтсе тăракан фонтан пур.

Павилйона пĕтĕмĕшпех туса çитереймен-ха. Ăна валли халĕ кăçал туса илнĕ куђтурăсене пухаççĕ. Шалти йĕркесене те хăшпĕр йенчен улăштараççĕ.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

★ ГРУЗИ ИСКУССТВИН ВЫСТАВКИНЧЕ. Малтанхи 11 кун хушшинче Грузи ССРеспубликин Государствăн Третйаковски галлерейĕнче (Мускав) уçăлнă выставкине курма 20 пин çын ытла пынă.

★ ЧИКЕ ХУРАЛĔНЧЕ ПУЛĂШАКАН КОЛХОЗНИКСЕНЕ ПРЕМИСЕМ ПАНĂ. Азербайджан ССРеспубликин Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн тăван çĕршыв чиккисене сыхлакан пограничниксене пулăшнăшăн 22 колхозникe хаклă парнесемпе—сехетсемпе, патефонсемпе, велосипедсемпе наградăланă.

★ ЛЕНИНГРАДРА 38 ÇĔНĔ ШКУЛ ТУНĂ. Ленинградра çак кунсенче 23 çĕнĕ шкул туса пĕтернĕ. Çулталăк пĕтнĕ çĕре тата 15 шкул ĕçлеме пуçлаççĕ. Çак 38 шкулта 33 пин ача ирхи сменăра вĕренме пуçлаççĕ.

Декаберĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Суйлав участкинчи агитпункт

ОРИНИНО колхозри вулав çурчĕ електричествăпа çуттипе çутăлса тăрать. Стенасем çинче лозунгсем, çулпуçсен сăнĕсем. Кунта суйлав округĕнче палăртнă Чкалов, Стецкий, З. Андрейева йулташсен портречĕсем, вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă листовкăсем çакăнса тăраççĕ.

Кунтах пĕтĕм тĕнчери ларутăру, Совет Сойузĕнче пулса иыракан ĕçсем çинчен радио тăрăх пĕлме пулать. Унтах биллиард, шашкă-шахмăт, хаçат-журнал, кĕнеке. Хор, драмкружоксем ĕçлеççĕ. Колхозниксем, колхозницăсем суйлав саккунне вĕренеççĕ. Çавăнпа кунтан халăх татăлма пĕлмест. Ватти вĕтти, колхозник, колхозницă—пурне те кунта курма пулать. Икĕ пӳлĕм, икĕ пӳлĕмĕнче те халăх.

Вулав çурчĕпе участкăри суйлав комиссии пĕр ĕçех тăваççĕ, вĕсем суйлав куние хатĕрленеççĕ. Колхозниксене, колхозницăсене вĕрентме кружоксем организациленĕ. Участкăра 9 агитатор ĕçлет. Ку ĕçе тума учителсене хушнă. Кунсăр пуçне тата кашни бригадăрах хаçат вулавçисем ĕçлеççĕ. 5 комсомолец килсене çӳресе вĕрентеççĕ.

Халĵхи вăхăтра суйлав саккунне 352 çын вĕренет. 196 çынна вĕрентсе кăларнă та ĕнтĕ. Кашни суйлавçă аллинче Аслă Совета суйламали Положени. Ку кĕнекесене колхоз правлени илсе панă.

Нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче Орининора икĕ кружок ĕçлерĕ. Пĕр кружокĕ шкулта, унта 25 çын. Тепри вулав çуртĕнче. Ку кружокра 32 çын, вăл шутран çурри ытла хĕрарăм. Кружока участкăри суйлав комиççи председателĕ Арешменев йулташ йертсе пырать. Унăн ĕç меттăчĕ çинчен каламасăр иртсе каймалла çук. Вăл колхозниксене ăнланмала калаçу иртерет. Менле ăнланнине ыйтса пĕлет. Вăл Чкалов, Стецкий, Андрейева йулташсем çинчен каласа ăнлантарать, çавăнтах вĕсен сăнĕсемпе ĕçĕсем çинчен кăларнă листовкăсене вĕренекенсене салатса парать.

— „Есĕр, Стецкий йул. пирĕн пата йанă телеграммăна вуланă, акă унăн сăнĕ, пăхăр. Ку Чăваш Тĕпĕçтăвком председателĕ Андрейева йулташ, ку Совет Сойузĕн Геройĕ Чкалов йулташ. Çак кандидатсемшĕн сасăламала пирĕн",—тет вăл Çавăнтах ку кандидатсем çинчен тепĕр хут калаçу пуçланса кайать. Кашни ыйтса пĕлесшĕн, тĕрлĕ ыйтусем параççĕ.

Совет суйлавне хатĕрленес ĕçе пионерсем те хутшăннă. Вĕсем кашни колхозник, йединоличник патне килĕсене çӳресе суйлав кунĕ çинчен пĕлтереççĕ. Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшĕн сасăлама агитацилеççĕ. Лидийа Капустинапа Павел Крысин пионерсем агитатор пулса ĕçлеççĕ. Крысин пионер—Васильева агитатор вĕрентекен кружока çӳрет, ун хыççăн хăйсен тăванĕсене, пускилĕсене суйлав саккунне ăнлантарать, кандидатсемшĕн агитацилет. Лидийа Капустина пионерта хăйĕн тăванĕсене ăнлантарать. Лидийа Капустинăн ашшĕне округри суйлав умĕнхи пухува кайма суйланă пулнă. Анчах вăл Аслă Совета суйламали Положенине пĕлмен. Вара Л. Капустина пионер хăйĕн ашшĕне суйлав саккунне вĕрентнĕ, кандидатсем çинчен каласа кăтартнă.

Ф. Иванов, Трофимов йулташсем заңатисем пулас умĕн агитаторсемпе семинар иртереççĕ. Пĕтĕмпе 7 семинар иртернĕ. Кунсăр пуçне агитаторсене пухса канашлусем те тăваççĕ.

Суйлав кампани пуçланнăранпа колхозниксене пухса 11 пуху иртернĕ. Ку пухусенче Сталинла Конституципе çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен сӳтсе-йавнă. Кунсăр пуçне тата çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен колхозниксем ыйтупа ответсен касĕ туса иртернĕ.

Андрей Капустин доверенăй пухусенче, канашлусенче Чкалов, Стецкий, Андрейева йулташсен кандидатурисемшĕн агитацилет. Вăл агитаторсемпе çыхăнса ĕçлет. Вĕсене вĕрентет, хăй те вĕсенчен вĕренет. Ăна кашни кунах суйлав участкинче курма пулать.

Оринино колхозĕн хăйĕн радиоузел, типографи. Радиоузелпа виçĕ йал (Оринино, Лапкасси, Мулкаччасси) уса кураççĕ. Пĕр Оринино йалĕнчи колхозниксен килĕсенчех 62 радиоточка. Колхозниксем центрти, республикри, районри хаçатсене 183 екземпĵар çырăнса илеççĕ.

Суйлав участкин центрĕ шкулра. Кунта плакатсем, лозунгсем, диаграммăсем. Спискăсене тӳрлетнĕ. Суйлав комиссии пӳлĕменче ирпе те, каçпа та тĕрлĕ ыйтусем çине ответсем илме пулать. Кунта комиççи членĕсем черетлĕн ларaççĕ. Кабинăсене тăваççĕ, лампă, чернил, ручкă тавраш çителĕклĕ. Суйлавçăсене валĵи кĕтсе лармалли залă пур. Унта буфет, биллиард, кĕнеке-журнал, справкă паракан сĕтел пулать. Суйлав кунĕнче ватă карчăксене, стариксене суйлав участкине илсе пыма йатарласа лашасем уйăрнă. „Суйлав кунĕнче черет пулмасть пирĕн"—тет участкăри суйлав комиççин председателĕ.

П. Перлов.

Стахановла семйе

Çĕнĕ-Шелттемри „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозра (Канаш р-нĕ) Алексейев Семен семйи кăçал пурĕ 1200 ĕçкунĕ тунă.

Алексейев Семенăн семйинче ĕçлеме пултараканни пурĕ 3 çын, семйере пурĕ 7 çын. Алексейев хăй конĵухра ĕçлет, кăçал вăл 451 ĕçкунĕ тунă.

Çапла вара Алексейев семйи кăçал пурĕ 600 пăт тĕштырă, 72 пăт çĕрулми, 360 тенкĕ укçан илет.

Кăçал Аслă Октăбĕр революци уйавне иртерме пухăннă пухура Алексейев çемйинчен 3 çын преми илчĕç. Вĕсем çуракине хатĕрленнĕ вăхăтран пуçласа тырпула пухса кĕречченех тăрăшса ĕçлерĕç.

И. Радиков.

В. П. Чкалов. Ăна Горький суйлав округĕ тăрăх РСФСР-тан Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. В. П. Чкалов кандидатуришĕн Чăваш республикинчи пĕтĕм суйлав участкисенчи суйлавçăсем сасăлаççĕ.

Учителсем—участкăри агитаторсем

Çирĕклĕ Шăхаĵ йалĕ (Йелчĕк р.) хăй пĕр суйлав участки пулса тăрать. Кунта пурĕ 447 суйлавçă. Çав суйлавçăсене "ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕрентес йенĕпе 8 агитатор ĕçлет. Вĕсем пурте учителсем, вĕсенчен çурри ытла комсомолецсем.

Çирĕклĕ Шăхаĵре те агитацилĕ массăлă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе комсомол организацийĕ хăйĕн вăйне, пултарулăхне сахал хуман.

Халăха суйлав саккунне вĕрентме кунти комсомолецсем суйлав Положени тухнă хыççăнах тытăнчĕç. Вĕсем ĕççынниcене Сталинла çĕнĕ Конституципе тата йут патшалăхсенчи суйлав системисемпе паллаштараççĕ, Совет Сойузĕн 20 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Картăсемпе, схемăсемпе кирлĕ пек уса кураççĕ.

Агитаторсене уйрăм кварталсем çумне çирĕплетнĕ, кашни кварталă 10 йе 11 хуçалăх керет. Вĕсен ĕçĕсене уйрăмăн илсе пăхсассăн, çакна курма пулать. Краснова, Наумов, Куприйанова учител-агитаторсем хăйсен участкисенче хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене çырма, вулама вĕрентеççĕ. Суйлав кунĕ тĕлне кашни суйлавçă хут пĕлекен пулать.

Миканова, Николайев, Карсаков агитаторсем те ыттисем пекех план тăрăх ĕçлеççĕ. Вĕсем ирхине, шкулта вĕрентме пуçличчен, каç кӳлĕм, шкулти заңатисем пĕтнĕ хыççăн, 4—5 хуçалăхри суйлавçăсене пĕр çĕре пухса, вĕсене суйлав саккунне вĕренгеççĕ. Ватă пирки йе тата ытти сăлтавсемпе кӳрше пыма йывăрăн туйакан суйлавçăсем патне килĕсене кайса ăнлантарса параççĕ.

Агитаторсем суйлавçăсене, суйлав саккунĕпе суйлав техники çинчен вĕрентнипе пĕрлех, кашни кунхи хаçат-журналсенчи çĕнĕ хыпарсемпе те паллаштараççĕ.

Çирĕклĕ Шăхаĵ ĕççыннисене Аслă Совета суйлама палăртнă кандидатсен биографийĕсемпе тĕплĕн паллаштараççĕ. Кашни агитатор аллинче Чкалов, Цыганова, Харитонова йулташсен сăн-ӳкерчĕкĕсем, биографийĕсем пур.

Çирĕклĕ Шăхаĵ ĕççыннисем камшăн сасăламалине пĕлеççĕ.

К. Воробйов.

Хаçатсене пăхса тухни

Агитаци нихăçанхинчен те вăйлă пулмала

ПСК(б)П Йелчĕк райкомĕпе райĕçтăвкомĕн „Колхоз йалавĕ" хаçат октăбĕрĕн 6-мĕшĕнче тухнă номĕрте район руководителĕсем суйлав саккунне мĕн таран пĕлнине кăтартать.

„Районри учрежденисенче ĕçлекен паллăрах çынсем суйлав Положенине мĕнле пĕлнине тĕрĕсленĕ хыççăн, тĕлĕнмелле фактсем палăрчĕç. Районри финанс пайĕнче ĕçлекенсем, унăн пуçлăхĕ Жирнов йулташран пуçласа, пĕрийĕ те суйлав Положенине пĕлмеççĕ".

Районти ытти учрежденисемпе организаци руководителĕсем те Жирнов пекех пулнине кура хаçат çакăн пек вывăд тăвать.

„Совет оргăнĕсенче ĕçлекен çын халăх ыйтăвĕсене татса паракан, халăха вĕрентекен, халăха Совет влаçĕн саккунĕсене ăнлантарса паракан çын пулмала. Халĵхи вăхăтри тĕп ĕç вăл—халăха суйлав саккунне тĕплĕн ăнлантарса суйлава лайăх хатĕрлесси пулать".

Хаçат тĕрĕс çул çине тăрса, хăйĕн пĕтĕм ĕçне ССРС Аслă Совет суйлавне лайăх хатĕрлесе иртерес ĕçе пăхăнтарнă. „Колхоз йалавĕ" хаçат номĕртен-номĕре суйлавçăсене суйлав саккунне ăнлантарса пырать. Октăбĕрĕн 12-мĕшĕнче тухнă номĕрте йалсемпе колхозсенчи вулав çурчĕсем, клубсем, хĕрлĕ кĕтессем, библиотекăсем Аслă Совет суйлавне мĕнле хутшăннине, вĕсем малашне мĕн тумаллине кăтартать.

„Колхоз йалавĕ" хаçат правителствă 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшне ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун тăвасси çинчен йышăннă постановлени тавра районти ĕçхалăх массине мобилизацилеме пултарнă. Октăбĕрĕн 16-мĕшĕнче тухнă номĕрте хаçат:

„Суйлав кампани пуçланчĕ. Партийецсемпе партире тăман большевиксем, Совет Сойузĕнчи мĕн пур ĕçхалăхĕ—суйлав кампанине хутшăнăр!" лозунгпа тухнă. Хаçат Йелчĕкри вăтам шкулра, „Новая Волна" колхозра митингсем пулса иртни çинчен, вĕсем йышăннă резолюцисене пичетлет. Умстатйара хаçат ĕçхалăхне клас тăшманĕсене хирĕç хайаррăн кĕрешме, ССР Сойузĕн Аслă Советне çĕршывĕн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсене суйлама чĕнет. Çак номĕртех „Колхоз йалавĕ" хаçат суйлав кампани вăхăтĕнче колхозри стена хаçачĕсен агитаци ĕçне, чи малтан—тĕне хирĕç агитацине анлăн сармалли çинчен уйрăм статйа пичетленĕ.

Хаçат октăбĕрĕн 21-мĕшĕнче агитаторсемпе пропагандиссем халăха суйлав саккунне мĕнле ăнлантарса панине кăтартакан хаклă материалсене пичетлесе кăларнă. Крупскайа йачĕпе тăракан колхозри агитатор Сметанин йулташ акă мĕн çырать:

„Лаш Тайапа йалсовечĕ çумĕнче суйлав Положенине вĕрентме кружок тунă. Унта 30 çын. Халĕ кружок хăйĕн программине вĕренсе пĕтерчĕ. Кружокра вĕреннĕ çынсенчен нумайĕшĕ йалти халăха—суйлавçăсене суйлав Положенине ăнлантарса параççĕ".

Йелчĕк йалсовет председателĕ В. Патшин йулташ хăй йертсе пыракан кружок ĕçĕсем çинчен çырса пĕлтерет. Вăл хăй 50 çынран уçнă кружока йертсе пырать. Вĕренекенсене кружокран вĕренсе тухсан, пурне те тенĕ пекех, агитаторсем туса участкăсем çумне çирĕплетнĕ. Хаçат кунпа лăпланма хушмасть, вăл Патрикелре, Пăвайалĕнче, Енелре суйлав саккунне çиелтен ăнлантарнипе чарăннисене хытă критиклет.

Октăбĕрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа „Колхоз йалавĕ" хаçат хăйĕн ĕçне суйлав участкисене куçарать. Суйлав умĕнхи пухусем мĕнле иртнине, агитаципе пропагандă ĕçĕсем мĕнле тăнине, суйлавçăсен спискисене мĕнле тунине, суйлав çурчĕсене мĕнле хатĕрленине тăтăшах çутатса пырать. Ку номĕртех Сметанин, Николайева, Князев йулташсен сăмахĕсем. Кун хыççăн вара хаçат Йелчĕк, Тайапа Ентри, Çĕнĕ Пăва, Тӳскел тата ытти суйлав участкисенче ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртнă Сталин, Чкалов, Ворошилов, Горкин, Цыганова йулташсем çинчен сӳтсе-йавас ĕç мĕнле пыни çинчен пĕрмайах çутатать.

„Колхоз йалавĕ" суйлав комиççисен (Йелчĕк, Патрикел) ĕçĕсене лайăхлатма пулăшать. Хаçат тăтăшах лайăх опытсене кăтартса, начар ĕçлекенсене ĕçлеме вĕренме пулăшать. Суйлав саккунĕн уйрăм статйисене ăнлантаракан статйасем пичетлет. Ку суйлавçăсемшĕн питĕ усăллă. Хаçат партипе правителствăн çулпуçĕсене—Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Йежов йулташсене ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă ĕççынни организацисемпе обществисем йышăннă резолюцисен евĕрлĕхине пичетлет. Ку та питĕ кирлĕ ĕç.

Хаçатăн лайăх йенĕсем татах та пур. Хаçатсен халĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама тăратнă, округ суйлав комиççисем регистрациленĕ кандидатсемшĕн агитаци ĕçне нихăçанхинчен вăйлă сармала. Пĕтĕм суйлавçăсене суйлава 100 процентпа тухмала тăвассишĕн агитацилемелле. Çак ĕçсен тĕп вырăнĕ—суйлав участкисем пулаççĕ. Халăх тăшманĕсем хăйсен киревсĕр ĕçне çав участкăсенче тĕрлĕ майсемпе туса пыраççĕ. Хаçат ĕççыннисене суйлава лайăх хатĕрлес тет пулсан, агитаципе пропагандă ĕçне тата конкретларах тумала, тăшмансене хирĕç тата вăйлăн кĕрешмеле.

Алгеш суйлав участки суйлава хатĕр

КӲКЕÇ. Алгеш суйлав участкинче (Шупашкар р.) пĕтĕмпе 34 агитатор. Вĕсем пурте Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсен биографийĕсемпе суйлавçăсене паллаштараççĕ.

Суйлав çурчĕ йалсовет канцелярийĕнче пулать. Халĕ кунта суйлавçăсене вăрттăн сасăлама 8 пӳлĕм туса çитерне. Кашни пӳлĕмрех сĕтел, пукан, чернил, ручкă, карандаш тата ыттисем те хатĕр. Суйлава пынă суйлавçăсене валĵи уйрăм кĕтмели çурт пур. Ку çуртра вăхăта культурăлă иртерме хаçат-журналсем, шашкă-шахмăт, биллиард, тата ыттисене те хатĕрленĕ.

Ватă суйлавçĕсене суйлава пыма кашни колхозрах 4-шар лаша уйăрнă. Ачалă хĕрарăмсене суйлава тухма çăмăллăх пултăр тесе, [illegible] ачасем валĵи йаслĕ тунă.

Нойаберĕн 26-мĕшĕнче ку участкăри ларйок сулавçăсене кирлĕ таварсем сутма та пуçларĕ. Çавнашкалах суйлав кун пулмали буфет пӳлĕмне те тупса хунă.

И. Чирков, А. Йеремейев.

Пирĕн кандидатсем

Сергей Коротков

Йăлтăртатакан çутăсем çĕрлехи тĕтĕм-каç инçете курăнаççĕ. Колĵцовкă йалĕ çутăпа тулнă...

Колхоз клубĕн пысăк залне Колĵцовкăри мĕн пур халăх пухăннă. Сергей Ксенофонтович Коротков, Сталин йачĕпе тăракан чаплă колхозăн улшăнми председателĕ, хăйĕн йалĕпе сывпуллашса уйăралать. Вăл кăçал нихăçан курман пуйанлăхăн саккăрăмĕш тырпулне пухса кĕнĕ, халĕ ак амбарсем тĕштырăпа тапса тухас пек тулса тăнă чух, колхозран уйăралса кайать. Çирĕм тăхăр çулта Коротков йулташ Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕн заместителĕ пулса тăчĕ Акă халĵ, трибуна çине тухса, Сергей Ксенофонтович тăван йал çыннисем умĕнче сывпул сăмахĕ каларĕ. Çак уйăрлуăн çĕкленнĕ минучĕсенче Коротков умне Чăваш республикинчи чи лайăх колхоз çуралнин тата вăл малала чаплăн чечеклениcе пынин пĕтĕм историйĕ тухса тăчĕ. Ун уйхирĕсенче ӳссе пулнă çуламлă пучахсен мухтавĕ тахçанах республикă тулашĕнчен тухса айакка саралнă.

Çичĕ çулта ашшĕсĕр йулса, вăл çак йалта кĕтӳ ачи пулса тăнă. Вуннуççĕре вăл—фронта, Хĕрлĕ çара, тарса кайнă, штабра рассылĵкăй пулса ĕçленĕ. Çирĕме çитсен Сергей Коротков, йалти комсомолецсемпе пĕрле, хăйĕн тăван Колĵцовкине йусаса çĕнетме тытăннă Çĕр ĕçне пĕрлешсе ĕçлес шухăш унăн витĕр те усăмлăн курăннă. Анчах ĕмĕртен хăйсен çĕр лаптăкĕпе хăйсен лаши çумне çыпçăнса пурăннă çынсен ăстăнĕпе чĕрисене мĕнле чĕртес çак шухăшпа? Йăрансене петерсе, пĕрлешӳлĕ вăйпа çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçе тытăнма мĕнле ӳкĕте кĕртес вĕсене?

Вăл тапхăрта Сергей ыйăх тĕлне пĕлми пулать. Çапла вăл, витĕмлĕ те çивчĕ шухăш çынна пуçĕпех çавăрса илессен. Çак кунсенчен пуçласа, Сергей Коротковăн пурнăçĕ колхоз ăраскалĕпе таччăн çыхăнса кайать, унăн биографийĕ вăл пăхса ӳстернĕ колхозăн историйĕнчен уйăрăлми пулса тăрать.

Сергей пĕр вăхăтрах йалсовет секретарĕ тата вулав çурчĕн пуç лăхĕ пулса ĕçленĕ. Усă кăмăллă та халапçă çын, вăл çамрăксене вулав çуртне йаланах йаваçтарнă. Анчах çитĕннисемпе ватăрах хресченсем кунта çӳремен.

Сергейе пулăшма радио килчĕ. Вăл тапхăрта радио йалшăн асамăçла йапала пулнă. Вулав çурчĕ тăвăрланчĕ. Кунта хресченсем, хĕрарăмсем, стариксемпе ачасем çӳре пуçларĕç. Вĕсем инçетрен килекен сăмаха тимлĕн итлеççĕ. Çур сехет, пĕр сехет хушши хресченсем радио итлеççĕ, унтан Сергей, ăнсăртран тенĕ пек, репродуктăра чарать те, итлекенсене пĕрлешӳлĕ хуçалăха мĕнле пуçарса йамали çинчен хĕрӳлĕн ăнлантарма тытăнать.

Вунултă хуçалăх кĕчĕç колхоза. Вунултă хуçалăх—йалти чухăнсем. Йал малтанхи колхозниксене, вĕсен çамрăк та опытсăр пулнă руководителне — Сергей Короткова шанмасăр куçайĕн сăнаса тăрăтчĕ.

Халĵ акă колхозăн йĕркерен те йĕркерен ларса тухнă çурчĕсем çине пăхса, колхоз пуçланнă чухнехи Колĵцовкăна асăнатăн та, тĕлĕнетĕн. Çĕмĕрĕлсе, тутăхса пĕтнĕ урапасен купи, картишĕнче хăрана лашасен кĕтĕвĕ.. Чĕлпĕрсем, йури тăрăхласа хăтланнă пек, сахал...

Анчах Короткова малтанхи çитменлĕхсем пăшăрхантарман. Çав кунсенче унăн чĕрери хăвачĕ çулăмланса хĕрнĕ, вăл çынсене йертсе пыма вĕреннĕ. Ку йăвăр та чейе искусствă ăна сасартăках мар парăннă. Мĕн чухлĕ Сергей, колхозниксене ĕçе йыхăрса, ирсерен кăвак çутăпа килĕрен чупнă! Хăйĕн шанчăклă йулташĕсемпе пĕрле колхоз председателĕ кунĕкунĕпе хирте, йалта ĕçлесе çӳренĕ Анчах та колхозăн лайăх çурчĕсем ӳсме пуçласассăн, уйхиртен колхозпа тунă малтанхи тырпул кĕр сессĕн, хресченсем колхоза зайавленисем илсе пычĕç. 1932 çултан пуçласа Колĵцовкă коллективлă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕ, йалта пĕр йединоличник та йулмарĕ.

Хуçалăх вăйланать. Колхозниксен кил-çурчĕсене тулăх пурнăç килчĕ Колхозпа пĕрле çамрăк председателĕн организацилĕ таланчĕ те ӳссех пычĕ Коллективлă пысăк йалхуçалăхне тытса пырас ĕç опычĕ çулсерен пуйанланать. Коротков çитĕнсе çирĕпленчĕ, пĕтĕм халăх хисеплекен руководител пулса тăчĕ. Çирĕм икĕ çулта Сергей государствă ĕçĕнче ĕçлеме тытăнать: ăна ун чух Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн членне суйлаççĕ ..

Колĵцовкă ĕççыннисем хăйсен хастарлă, пĕр шухăшлă, ударлă ĕçĕпе мухтава тухрĕç. Пурте пĕлеççĕ—председателĕн сăмахĕ çирĕп: хăй мĕн тума пулнине вăл йаланах тăват, анчах ыттисенчен те хушнă ĕçе вăхăтра тума ыйтать.

Колхозăн пысăк çĕнтерĕвĕсене чыса хурса, Колĵцовкăра республикăри чаплă çынсен сиесĕ пухăнать. Хăнасем мĕн пур йенчен машинăсемпе те лавсемпе килеççĕ. Шăлса тасатнă сукмак тăрăх çамрăк сад урлă вĕсем пысăк çуртăн крылĵци патнелле пыраççĕ. Краскă та типсе çитеймен, стенасенчен сухăр шăрши кĕрет. Террассăн çĕнĕ пусмисем тăрăх ура сассисем сулăмлăн йанăраса кайаççĕ. Чӳречесем пысăк. Пӳлĕм хĕвел çутипе тулнă. Йуман шетниксене—йешĕл çеçкесем. Ку—колхоз председателĕн кабинечĕ. Сергей Коротков хăнасене хаваслăн кĕтсе илет, вĕсене анлă фойе тăрăх йертсе кайать, клубăн аслă залне, хата-лабораторине, радиоузела кăтартать. Хăнасем колхозăн мĕн пур çурчĕсемпе колхозниксен килĕсене електрицă енергийĕ илсе кайакан провăдсен йарăмĕсене кураççĕ.

Колхозниксем хăнасене тĕкĕрсемпе пĕчĕк сĕтелсем çинчи йур пек шурă скатĕртсемпе çуталса тăракан пысăк столовăйне илсе кайаççĕ. Пысăк зал—чăн-чăн ресторан. Çак кунсенче Коротков та, пĕтĕм колхозниксем те мухтавлă сăмахсем нумай илрĕç.

1934 çулта Короткова Мускава чĕнеççĕ. Унран малтанах шухăшласа пăхма ыйтрĕç: йалхуçалăх ертелĕн уставне мĕнле улăштарусем кĕртме кирлĕ пек шутлать вăл? Çамрăк колхоз председателĕн хуçалăхри пултарулăхĕ, ăсталĕ, пысăк ĕç опычĕ государствă ыйтувĕсене сӳтсе-йавнă çĕрте кирлĕ пулчĕ. Коротков Мускава пуçласа малтанхи хут пырса çитрĕ. Вăл хăй кĕмели çурта хуллен çеç утса кĕчĕ, кунта пĕр пӳлĕмре уйхирсенчен килнĕ хăй пекех чаплă çынсем пухăнса ларнă. Коротков хăй кăсйинчен вĕттĕн çырса тултарнă хут татăкĕсем икĕ листа кăларчĕ.

Кусем устава кĕртме колхоз активĕпе малтан хатĕрлесе хунă сĕнӳсем пулнă Çав шухăшсенех Коротков кăшт кайарах колхозник-ударниксен Пĕтĕм Сойузри 2-мĕш сиесĕн редакци комиççийĕнче те тухса каланă. Нумай мĕлйунлă хресченсен пурнăç çулне кăтартса паракан документа редакцилевĕ çĕрте хĕрӳлĕн хутшăнса ĕçленишĕн вăл тивĕçлипе хĕпĕртет.

Çак сиесрах Короткова президиума суйланă. Илемлĕ çутăсемпе йалкăшакан, çынсемпе тулнă залра Сергей Коротковăн малтанах куçпуçĕ сапалавса кайрĕ. Партипе правителствă руководителĕсене вăл малтанхи хут çывăхран курчĕ.

Унтан Сергей Ксенофонтовича сиесра председател пулма хушрĕç. Кăмăлĕ хумханнипе унăн пырĕнче типсе ларчĕ, куçĕ алчăрарĕ Коротков хăй аллине оратăрсен спискине тытрĕ, анчах çухалса кайнипе, черетри оратăрăн хушаматне аранăн çеç вуласа илчĕ. Унтан вăл çав хушамата, хыпăнса ӳкнĕ пек, васкавлăн та шаппăн микрофона каларĕ. Çамрăк председател хумханнине, унăн пысăк пухупа йертсе пыма опыт çитеймĕннине Сталин йулташ асăрхарĕ. Вăл Коротков патне пычĕ, лăплантарчĕ ăна, васкамасăр, хытăнрах калаçма, уйрăмах—хумханмасăр ĕçлеме сĕнчĕ.

Çулпуçĕн сăмахĕсем Короткова лăплантарчĕç. Малалахи хушаматсене вăл хăйуланрах каласа пычĕ, сăмай çирĕпленнĕ сасăпа оратăрсене вĕсен вăхачĕ иртсе пынине асăрхаттара пуçларĕ. Чăваш республикинчен пынă çамрăк колхоз председателĕ колхозник-ударниксен Пĕтĕм Сойузри сиесĕн икĕ ларăвĕне йертсе пычĕ.

1935 çулта Кремлре партипе правителствă руководителĕсем вăйлă тырпул ăстаçисене йышăнчĕç. Коротков вĕсен хушшинче пулнă. Виç-таватă кунран вăл хаçатсенче хăйĕн хушаматне Хĕрлĕ йалав Ĕç орденĕ илнисен спискинче курчĕ.

Колĵцовкăна таврансан, Коротков колхоз ĕçне тата пысăкрах хастарлăхпа тытăнать. Вăл Сталин йачĕпе тăракан колхозăн çĕрĕсем нихăçан курман вăйлă тырпул пама пултарассине ĕçпе кăтартма шут тытать. Вăйхала хĕрхенмесĕр Коротков çĕр çине агротехникăн мĕн пур йурăхлă майĕсемпе тăрăнать. Ку тĕлеле вăл йалхуçалăх йĕркисене опытлă агрономран кайа мар пĕлсе çитет. Колхозниксем хĕлĕ-хĕлĕпе агрокружоксенче вĕренеççĕ.

Илеççĕ тĕрлĕ минерал çăнăхĕсем, хире темиçе пиншер лав торф, кĕл кăлараççĕ Коротков ĕçе анлă утăмпа илсе пырать.

Çĕрĕçĕн ку таринччен пулман çĕнĕ меслечĕсем çине таврари йалсем шанмасăр пăхнă. Сергей Ксенофонтович малтавхи çĕнтерӳсемпе пысăк шанчăка тухнă пулин те, Колĵцовкă усă куракай торфла кĕлрен таврари хресченсем тăрăхласах кулнă. Анчах Колĵцовкă уйхирĕсенче çăра ырашпа тулă кашласа çĕкленсессĕн, Коротков тата тепĕр çĕнтерӳ тунине пурте йышăнчĕç. Колĵцовкă колхозникĕсем иртнĕ кĕркунне хăйсен уйхирĕсенчен пуйан тырпулă пухса кĕчĕç. Унчухне вара мĕн пур кӳршĕсем çамрăк колхоз председателĕн хуçалăхри талантне тата ытларах ĕненчĕç.

Колĵцовкă çăрĕн чиккине „Çиçĕм"

Суйлав техникине вĕренеççĕ

ИШЛЕЙ. Кӳстеркери „Самолет" колхозри колхозниксем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренмели кружока пурте активлăн хутшăнчĕç. Колхозра икĕ кружок ĕçлет. Вĕсене Шурчари туллимар вăтам шкулта вĕрентекен И. Тихоновпа М. Николайев учителсем йертсе пыраççĕ. Кружоксенче 6 занјати пулса иртрĕ. Суйлавçăсем вĕреннĕ чухне нумай ыйтусем параççĕ. И. Тихоновпа М. Николайев учителсем панă ыйтусем çине лайăх ăнланмала ответсем параççĕ.

Йулашки занјатире суйлавçăсем суйлав техникине вĕренчĕç. Ку занјатире суйлавçăсем хăйсен миçе бӳллетен пулмалли çинчен, бӳллетенсемпе конвертсем мĕн тĕслĕ пулмалли çинчен, мĕнле сасăламалли çинчен, т. ыт. çинчен те вĕренчĕç. Çитес кунсенче суйлав техникине вĕренмели занјатисем татах пулаç çĕ. Кунсăр пуçне суйлав техникине лайăх пĕлекен 23 çынна суйлавçăсен килĕсене кайса суйлав техникине вĕрентме çирĕплетнĕ. Вăл çынсем халĕ каççерен суйлавçăсене суйлав техники çинчен ăнлантараççĕ.

В. Сергейев.

Суйлав саккунне вĕренес ĕçе пурне те йавăçтарнă

ЕЛĔК. Чăваш-Сурăм суйлав участкине кĕрекен Шуркасси йалĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем суйлав саккунне тăрăшса вĕренеççĕ. Кружокра занјатисем эрнере 2 хут пулса иртеççĕ. Кунсăр пуçне йалта кружока çӳреме пултараймаn ĕçхĕрарăмĕсем çумне уйрăм комсомолецсене, колхозри активисене çирĕплетнĕ.

Суйлавçăсем çумне çирĕплетнĕ комсомолецсен тата активиссен ернере пĕр хут семинар пулса иртет. Суйлавçăсем пурте суйлавçăсен спискипе паллашнă. Суйлав бӳллетенĕсем çинчен, суйлав кунĕнчи йĕркесем çинчен аван пĕлсе тăраççĕ. Тата Совет Сойузĕн Геройĕ—Валерий Павлович Чкалов, Пумпур П. И. тата Иванов Г. Ив. биографийĕсене аван пĕлсе тăраççĕ. Колхозниксен кашни килте „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положени" кĕнеки пур.

Х. Йевграфов.

Списăка çул çитмен çынна кӳртнĕ

Питĕркасси суйлав участкинче суйлавçăсен спискине суйлав саккунĕнче кăтартнă пек тумаn. 1919 çулта çуралнă çынсен хăш числара, хăш уйăхра çуралнине лартман. Çавăнпа та унта суйлавçăсен ретне йанăш кĕрсе кайнисем те пур. Акă Хохлова Марийа Александровна 1920 çулта çуралнă пулин те, ăна списăка кӳртнĕ. Çак йанăшсене халех тӳрлетмеле.

П. Сатур.

Хĕрлĕ Чутай р.

П. ПОСПЕЛОВ

ПСК(б) Партин XV-мĕш сйесĕ

(Сйес пулни вунă çул тултарнă тĕле)

Вунă çул каяларах, 1927 çулти декабĕрĕн 2-мĕшпе 19-мĕш хушшинче, ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕ, пирĕн парти историйĕнчи чи пăллă сйессенчен пĕри, пулса иртнĕ.

Ку вăл бољшевикла парти çĕршывăн социалисăмлă индустрийĕшĕн çине тăрса кĕрешнĕ тапхăр пулнă. Индустри тăвас тĕп çулйĕр, ПСК(б)П уччĕнчи, XIV-мĕш сйесĕнче (1925 çулти декабĕр) Сталин йулташ кăтартса панăскер тата парти йышăннăскер, хăйĕн малтанхи резуљтачĕсене пама пуçланă.

„...Çĕршыв пирĕн индустрилĕ çĕршыв пулса пырать.

Парти задачи: пирĕн çĕршыва индустрилессине мĕн мур майсемпе малала илсе пырасси пулать", — тесе кăтартса панă Сталин йулташ ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕнче тунă Тĕпкомăн политикăлă отчотĕнче[1]).

Тулти тата шалти лару-тăру çĕршыва хăвăртрах индустрилеме хушнă. 1927 çулти май уйăхĕнче Англи консерватăрĕсем („хытçамкаллисем"), Англипе ССР Сойузĕ хушшинчи дипломатилĕ çыхăнăва татса пăрахмала турĕç. Пĕр вăхăтрапа пĕрех Варшавăра ССР Сойузĕн посолне Войков йулташа вĕлерне. Çав кунсенчех империалисăм агенчĕсем, шпионсем тата диверсантсем ССР Сойузĕн территорийĕнче вут тĕртсе йанисем, сăтăрла тата террорла ĕç тунисем чылай пулнă.

Çав, Англи империалисĕсем йенчен ССР Сойузне хирĕç тухас интервенци хăрушлăхĕ вăйланса кайнă самантра троцкисла провокаторсем парти çине тапăнассине уйрăмăнах вăйлатрĕç. Троцкиссем ун чухнех ĕнтĕ империалиссемпе пĕрле хăтланнă.

„Чемберленпа пуçласа Троцкийе çити тĕмĕнле пĕрлĕх фрончĕ йышши пулса пырать",—тесе каланă Сталин йулташ троцкиссен партийе хирĕçле тата советсене хирĕçле ĕçĕсем çинчен[2]).

Çĕршыв умĕнче çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем нумай туса лартас тата кивисене чи малта тăракан ăслăлăхпа техникă никĕсĕ çинче урăхлатса çĕнетес задачă тăнă. Индустриализаци никĕсĕ çинче йала çĕршер пин трактор тата ытти машинăсем памала пулнă, йалхуçалăхне социалисăмлă урăхлатса çĕнетмеле пулнă. Çавăн пек майпа кăна социалисăмлă економикăн çирĕп никĕсне хывма тата çĕршывăн оборонă пултарулăхне вăйлатса тĕреклетме май пулнă.

Партин XV-мĕш сйесĕ халăх хуçалăхĕн пĕрремĕш пйатилеткă планне тума директивă пачĕ. Аслă Сталин йертсе пынипе пĕрремĕш пйатилеткăна тăватă çулта (1932 çулта) тултарнă. Пĕрремĕш пйатилеткăна пурнăçа кĕртнине пула пирĕн çĕршывра социалисăмлă економикăн никĕсне хывнă. Пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче чăн-чăн техникăлă револјуци туса хунă. Промышленнăçăн паха çĕнĕ отрăçлисене чылай тунă. Совет машиностройенийĕ улăп пек малала йарса пуçрĕ. Кайа йулнă, аграрлă çĕршывран Совет Сойузĕ сталинла пĕрремĕш пйатилеткă çулĕсенче индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ.

Пĕрремĕш пйатилеткăна пурнăçа кĕртнине пула пĕтĕм промышленнăç продукцийĕ вăрçăччĕнхи виçепе танлаштарсан, виçĕ хут ытларах тата, 1928 çулти виçепе танлаштарсан, икĕ хут ытларах ӳснĕ. 1932 çулта ССР Сойузĕнче пĕтĕм промышленнăç продукцийĕ 1928 çулти виçерен 218,5 проц. иртсе кайнă пулсан, капиталисăмлă çĕршывсен промышленнăç продукцийĕ тĕнчери економикăлă кризиса пула 1928 çулти виçен 67 проц. таран чакнă[3]).

Икĕ система—çĕнтерсе пыракан социалисăм тата тăрăнран та тăрăн кризис кисретсе тăракан капиталисăм—историлĕ ăмăртнин итогĕсем хуçалăхăн социалисăмла системи малта тăнине, совет стройĕ çĕнтернине пĕтĕм тĕнче умĕнче куçкĕретĕн кăтартса пачĕç.

* * *

Çĕршыва социалисăмлă индустрилес политикă, Сталин йулташ йертсе пынипе парти пурнăçа çирĕп кĕртсе пынăскер, социалисăмлă обшчествă тăвас тепĕр паха задачă патне—ССР Сойузĕн йалхуçалăхне коллективласси патне куçма май хатĕрлесе ăна ĕçе кĕртессине татса пачĕ.

ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕнче Сталин йулташ партийе, ĕçхресченĕсене йалхуçалăхне **коллективлас** çул çине куçма чĕнсе каларĕ. Сталин йулташ вак хресчен хуçалăхĕсем чăтма çук кайа йулни çине кăтартса пачĕ. Социалисăмлă хула пулăшнипе тракторсемпе тата машинăсемпе хĕçпăшаланнă колхозсем кăна хресченсен йавăр ĕçне çăмăллатма пултарнă, йалхуçалăхне хăвăрт малала йама пултарнă.

„Çавăнтан тухмали ăçта?—тесе каланă Сталин йулташ парти Тĕп Комитечĕн политикăлă отчотĕнче.—Çавăнтан тухмали вакă та сапаланчăк хресчен хуçалăхĕсем çĕре пĕрле ĕçленĕ никĕс çинче шултра та пĕрлешӳлĕ йуçалăха куçнинче, çĕнĕ, ӳлте тăракан техникă никĕсĕ çинче çĕре коллективлă ĕçлесси çине куçнинче пулать"[4]).

Сталин йулташ пуçарнипе колхозсене пулăшма машинă-тракторлă станцисем организациленĕ. 1928 çулта çĕнĕ тĕштырă совхозĕсем те нумай организациленĕ, вĕсем тепĕр 2—3 çултан государствăна таварлă тырă нумай (çĕр мĕлйун пăт ытларах) пама пуçланă. Совхозсем хресченсене колхоз çулĕ çине çавăрнма пулăшрĕç. Малта пыракан шултра совхозсене, тракторсем мĕнле ĕçленине, машинсемпе тырпулă пухса кĕртнине пăхма, нумай пин хресченсем çӳренĕ. Вĕсем унта машинăсемпе ĕçлекен шултра çĕрĕçĕ малта тăнине куçпа курса ĕненме пултарнă,—çавăн пек çĕрĕçне куçма колхозсене пĕрлешмеле пулнă,—вĕсем коллективизацишĕн агитацилекенсем пулса тăнă.

Колхозсене мĕн пур майсемпе пулăшасси çинчен кăтарту панă ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕ хыççăн, йалта йалхуçалăхне коллективлассишĕн кĕрешӳ сарăлма пуçларĕ. Çавна хирĕç кулаксем хытă тăнă. Кулаксем „тырпул забастовки" тунă, государствăна тата кооперацийе тырă сутасшăн пулман. Кулаксем тырă пушатакан пунктсене тата колхозсене вут тĕрте-тĕрте йанă, йалсоветăн активлă работникĕсене, малта пыракан колхозникĕсене, йалкорсене тыта-тыта вĕлерне.

XV-мĕш сйес—„кулаксем çине наступлени тăвассине малала сарса пырса йалта капиталисăм аталанăвне картламалли тата хресчен хуçалăхĕсене социалисăм патнеле илсе пымали çĕнĕ мелсем йышăнма" хушса хăварчĕ.

1928 тата 1929 çулсенче çав XV-мĕш сйесăн лозунгĕпе кулаксем çине наступлени тăвасси вăйланчĕ, колхоз йухăмĕ вăйланчĕ. 1929 çул социалисăм строителствин пур фрончĕсенче те **аслă улшăну çулĕ** пулса тăчĕ. Çав çулта халăх хуçалăхне аталантармалли сталинла пĕрремĕш пйатилеткă планĕ ăнăçулăн пурнăça кĕрсе пыма пуçларĕ. Социалисăмлă индустри пысăк ăнăçусем тунă. Индустрилес йавăр задачĕсенчен пĕрне—йавăр индустри тума укçа-тенкĕ пухас задача тĕпрен татса хунă пулнă. Социалисăмлă ăмăртупа ударничествăна пула социалисăмлă предприйатисенче тата çĕнĕ стройкăсенче ĕç тухăçлăхĕ хăпарнă.

1929 çулта хресчен тĕп массисем уйрăм хуçалăхлă çул çинчен колхозлă социалисăмлă хуçалăх çулĕ çине çавăрăнчĕç. 1928 çулта-ха колхозсем 1.390 пин гектар кăна çĕр акнă. 1929 çулта вĕсем акакан çĕр лаптăкĕ 4.262 пин гектар тарана ӳнтĕ ӳснĕ. Чухăнсем хыççăн вăтамсем колхоза кĕнĕ.

Совхозсемпе колхозсем часах çавăн чухлĕ таварлă тырă пама пуçларĕç, çав тырă кулак хуçалăхĕсем тăвакан тырпула йалтах улăштарма пултарнă. Çĕршыври лару-тăру, непăн малтанхи çулĕсемпе, колхозсемпе совхозсем вăйсăр пулнă чухнехи вăхăтпа танлаштарсан, тĕпренех улшăннă. Сталин йулташ аграрник-марксиссен конференцийĕнче (1929 çулти декабĕрте) партийе, рабочи класа тата ĕçхресченĕсене кулаксен експлоатацилĕ туртăмĕсене картлас политикăран талкăшпе колхоза куçнă никĕс çинче кулаксен класне пĕтерес политикăна куçма чĕнсе каларĕ.

Сталинла пĕрремĕш пйатилеткă çулĕсенче 200 пин ытларах колхозсем, 5 пине йахăн шултра совхозсем, 2.500 йахăн машинă-тракторлă станцисем тунă. Çакă вăл совет йалĕн сăн-сăпатне тĕпренех улăштарчĕ. Кулаксен класне çĕмĕрсе тăкса пĕтерне. Йалта колхоз стройĕ çĕнтерчĕ. ССР Сойузĕ вак хресченлĕ çĕршывран социалисăмлă шултра çĕрĕçлĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Çапла майпа, социалисăмлă Аслă револјуцин влаçа илнĕ хыççăнхи йавăртан та йавăр задачине—йалхуçалăхне социалисăмлă урăхлатса çĕнетес задача туса хунă.

* * *

Социалисăм пирĕн çĕршывра капиталисăмлă елементсене хирĕç, çав капиталисăмлă елементсен агентурине—троцкиссене тата бухаринçăсене, кайарахпа фашисăм найомникĕсен, шпионсен, сăтăрçăсен, çынвĕлеренсен тата диверсантсен разбойла ирсĕр банди пулса тăнăскерсене, хирĕç хытă кĕрешсе çĕнтерне.

ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕ парти троцкисăма хирĕç нумай вăхăт кĕрешнĕ итогсене тунă. Троцкисăмăн пĕтĕм çулйĕрĕ, пĕтĕм тактики çав тапхăртах ĕнтĕ социалисăм строителствине аркатса тăкас, пирĕн çĕршывра капиталисăма кайала тавăрас йеппе пынă. Троцкиссем партийе тата рабочи класа пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерме пултарассине меншевикла ĕненмен чир йертесшĕн пулнă. Сталин й-ш йертсе пынипе бољшевикла парти троцкисăмăн буржуалă теорине çĕмĕрсе тăкрĕ. Троцкисла провокатăрсем рабочи класа ĕçхресченĕсемпе хирĕçтерсе йама тапаçланчĕç. XV-мĕш сйес, троцкисăмра тăракан тата унăн шухăшĕсене пропагандăлакан çынсем бољшевикла парти ретĕнче тăма (пултараймаççĕ, тесе каларĕ. Активлăрах троцкиссен ушкăнне партирен хăваласа каларчĕ.

Троцкиссемпе зиновйевçăсем XV-мĕш сйес умĕн тӳррĕм совета хирĕçле ĕçе ытларах та ытларах куçса пычĕç. Троцкиссем мĕн пур контрреволјуцилĕ вăйсене туртакен центр пулса тăчĕç. Троцкисла йыткĕтӳ шургвардейçăсемпе, Врангел офицерĕсемпе пĕрлешсе кайнă. Çав шургвардилĕ сволăчпа пĕрле троцкиссем вăрттăн типографисем тунă, унта вĕсем рабочи клас диктаурине хирĕç, коммунисла патине хирĕç чи ирсĕр контрреволјуцилĕ елек пичетленĕ. 1927 çулти нойабĕрĕн 7-мĕш кунĕнче троцкиссем совета хирĕçле демонстраци тума хăтланнă. Вĕсем пуçĕпех тӳррĕмлĕ контрреволјуци патне кайса çапăнчĕç.

ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕ хăйĕн решенийĕсенче çапла каларĕ: троцкисла-зиновйевла меншевикла ушкăн, ленинисăмран тахçанах хăпса кайнăскер тата пĕтĕм партипе пĕтĕм рабочи клас йенчен пĕр шухăшлă отпор илнĕскер, совета хирĕçле тактикăна куçрĕ. Сйес çапла каларĕ: троцкисла, меншевикла ушкăн „пролетари диктатури çĕршывĕн уçă тăшманĕсемпе пĕр рете"[6]) тăчĕ, троцкисла оппозици „мĕн пур çĕршывсенчи буржуази йенчен пит те анлă пулăшу илекен вăй пулса тăчĕ", [7]) терĕ.

Троцкиссем тата зиновйевçăсем Коминтерантан кăларса çапнă мĕн пур тăшмансемпе тата коммунисăмлă йухăма пăрахса тăшмана сутăннисемпе пĕрлешсе кайнă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн феврал-мартри Пленумĕнче (1937 ç.) каланă сăмахра Сталин йулташ троцкисăмăн контрреволјуцилĕ тупсăмне классикла палăртса пачĕ:

„Кучухнехи троцкисăм рабочи класри политикăлă йухăм мар, вăл урăх çĕршыв патшалăхĕсен разведкă оргăнĕсем патĕнче кĕрисе ĕçлекен сăтăрçăсен, диверсантсен, разведчиксен, шпионсен, çынвĕлеренсен принципсăр тата идейăсăр банди, рабочи класăн ылханлă тăшманĕсен банди пулса тăрать"[8]).

Троцкиссем социалисăмăн чи усал тăшманĕсем, халăх тăшманĕсем пулса тăчĕç, фашисла буржуазин шанчăклă йыттисем пулса тăчĕç, бухаринçăсемпе рыковçăсем те çавах пулса тăчĕç.

* * *

ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕ умĕн пирĕн çĕршыв совет влаçĕ вунă çул тултарнине уйавларĕ. Çав вунă çул хушшинче социалисăм тунă çитĕнӳсем пысăк пулнă. Империалисăм вăрçипе граждăн вăрçи ишĕлтернĕ хуçалăха Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе чи кĕске срукра ура çине тăратнă. ССР Сойузĕн индустрилĕ хăвачĕ çултан çул ӳссе пыма пуçларĕ. Днепрогес, Сталинградри трактор заводĕ т. ыт. пек промышленнăçлă гигантсен стройки пуçланчĕ.

Анчах малта тата та пысăкрах задачсем тăнă. Вунă çул кайарах пирĕн çĕршывра безработицă пулнă,—безработнăйсем пĕр мĕлйун çурăна йахăн пулнă. Анчах часах (1931 çулта), социалисăмлă индустрилессин çитĕнӳвĕсене пула, безработицăна пĕтĕмпех пĕтерме май килнĕ.

1927 çулта йалта мĕлйуншар чухăн хуçалăхсем пулнă. Совет влаçĕ тĕрлĕрен çăмăллăхсемпе пулăшу панă пулин те, вĕсем вакă, сапаланчăк уйрăм хуçалăхпа пурăнса, пушаран тата кулак пусмăрĕнчен тухма пултарайман. Коллективизаци кăна, Сталин йулташ ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕнче кăтартса панă çул кăна, мĕлйуншар чухăнсемпе вăтамсене телейлĕ колхоз пурнăçĕн çулĕ çине илсе тухрĕ.

Совет влаçĕн иккĕмĕш вунăçулăхĕнче пирĕн çĕршыва тĕпрен илсен социалисăмлă обшчествă туса хунă. Социалисăмлă индустри улăп пек малала йарса пуçрĕ, продукци хисепĕпе вăл Йевропăра пĕрремĕш вырăн тата, тĕнчере иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. 1928 çулта ССР Сойузĕн шултра промышленнăçĕ 16,8 мĕлйарт тенкĕлĕх продукци панă—1913 çултинчен пĕр хут çурă ытларах. Совет влаçĕн иккĕмĕш вунăçулăхĕнче—1936 çулта, вăрçăччĕнхи виçерен 7 хут ытларах, 1928 çулти виçерен 3 хута йахăн иртсе кайнă.

Совет влаçĕн иккĕмĕш вунăçулăхĕнче йалхуçалăхĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Унăн продукцийĕ, вăрçăччĕнхи виçепе танлаштарсан, икĕ хут ӳснĕ. Çак çулта ĕнтĕ колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсенче 6,8 мĕлйарт пăт тĕштырă туса илнĕ. Епĕр ĕнтĕ Сталин йулташ лозунгне—çулсерен 7—8 мĕлйарт пăт тĕштырă туса илес лозунга пурнăça кĕртесси патне çывăхах çитсе тăтăмăр.

Пирĕн çĕршыври социалисăмăн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ вырăн йышăнса тăракан çĕнтерӳсем пурте çав çĕнтерӳсене хавхалантарса тата организацилесе пыракан Сталин йулташăн йачĕпе çыхăнса тăраççĕ. Халăхсен çулпуçĕн Сталин йулташăн йачĕ совет халăхĕн асларăн та аслă политикăлă тата моралјĕ пĕрлĕхĕн çимволĕ, йалавĕ пулса тăчĕ.

ССР Сойузĕн халăхĕсем, бољшевикла парти тавра тата Совет влаçĕ тавра пĕтĕçсе тăраканскерсем, социалисăм çĕнтернĕ çĕршывăн Сталинла Конституци йалавĕпе ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас историлĕ кун патне пыраççĕ.

Социалисăм çĕнтернĕ çĕршывăн Сталинла Конституци йалавĕпе, Ленин—Сталин аслă партийĕ йертсе пынипе ССР Сойузĕн халăхĕсем коммунисăм çĕнтерӳвĕ патне шанчăклăн утаççĕ.

[1]) ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕ стенографилĕ отчот, стр 52. ГИЗ, 1928 ç.

[2]) И. Сталин. Оппозици çинчен, стр. 605.

[3]) ССР Сойузĕн халăх хуçалăхне аталантармалли пĕрремĕш пйатилеткă планне пурнăçа кĕртнин итогĕсем. М. 1933 ç., стр. 20.

[4]) Сталин, ПСК(б)П Тĕпкомĕн XV-мĕш сйесĕнче тунă политикăла отчот, ПСК(б)П XV-мĕш сйесĕн стеногр. отчочĕ, ГИЗ, 1926 ç., стр. 56.

[5]) ПСК(б)П резолјуцисенче, II пай, стр. 260, Партиздат, 1936 ç.

[6]) ПСК(б)П резолјуцисенче, II пай, стр. 264. Партиздат, 1936 ç.

[7]) ПСК(б)П резолјуцисенче, II пай, стр. 265. Партиздат, 1936 ç.

[8]) И. Сталин. Партилĕ ĕçĕн çитменлĕхĕсем çинчен, троцкисла тата ытти икĕпитлисене пĕтерес ĕçсем çинчен. Партиздат, Стр. 14. 1937 ç.

Довереннăй ăнлантарса пачĕ

Трак районĕнчи Кужар суйлав участкинче суйлавçăсем хушшинче агитацилĕ ĕçе анлăн сарса йана. Кашни суйлавçăнах ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренме хутшăнтарнă. Нойабĕрĕн 20-мĕш тĕлне суйлав пӳлĕмĕсене туса пĕтерне. Буденный йачĕпе тăракан колхозра кашни килĕрех хĕрлĕ йалавсем хатĕрлеççĕ. Суйлавçăсем хушшинче уйрăмăнах комсомолецсем хĕрӳлĕ ĕçлеççĕ. Суйлав кунĕнче ача йасли ĕçлемеле. Халјхи вăхăтра округра регистрациленĕ кандидатсем çинчен агитацилес ĕç сарăлса пырать.

В. Илларионов.

колхоз çĕрĕсем пырса тĕкĕнеççĕ. Каççерен кӳршĕсем илемлĕ çутăпа йалтăртатакан Колјцовкă çине пăхса киленеççĕ. Çулахи вĕри ĕç вăхăтĕнче вĕсем мухтава тухнă Колјцовкăн пĕр кăмăллă та ăмăртулă ĕçне сăнаççĕ. Хĕлле „Çиçĕм" колхозникĕсем—Колјцовкă клубĕн йалан хи хăнисем, вĕсем кунта çĕнĕрен çĕнĕ калаçакан кино картинсем пăхаççĕ. „Çиçĕм" колхозникĕсем Сергей Короткова лайăх пĕлеççĕ, хаклаççĕ ăна, хисеплеççĕ. Вĕсен куçĕ умĕнчех нумай та пулмасть Колјцовкăра илемлĕ вăтам шкул ӳссе ларчĕ. Кĕçех ак пысăк болјницă тата ача çуратмали çурт туса çитереççĕ, кунта кӳршĕ йалсенчи колхозниксем валјли те вырăн пулать.

„Çиçĕм" йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕсемпе колхозницисен суйлав умĕнхи пухувĕнче пĕрремĕш сăмах бригадир Петр Николайев илчĕ. Вăл каларĕ:

— Сергей Коротков Колјцовкă колхозне бољшевикла колхоз, колхозниксене пуйан пурăнакан тăвассишĕн нумай ĕçлерĕ. Вăл хăйĕн кăкри çинче Хĕрлĕ йалав Ĕç орденне тивĕçлипе илсе çӳрет. Вăл пирĕн куç умĕнче ӳссе çитĕнчĕ, пирĕн куç умĕнчех çĕршывăн чаплă çынни пулса тăчĕ. Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пурнăçа тĕрĕс кӳртсе пырса вăл пĕтĕм колхозниксемпе пĕрле телейлĕ пурнăça çитрĕ. Кун çинчен епĕр пурте пĕлетпĕр. Çавăнпа та епĕ Коротков йулташа Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх кандидата тăратма сĕнетĕп.

Петр Николайевăн сĕнĕвне пурте хĕрӳлĕн ырларĕç. Ăна, Петр Николайева, пухупа тăратнă кандидатшăн агитацилеме довереннăйа суйларĕç. Ăна, Симбирский комсомолецпа пĕрле, Коротков патне, унрач Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ ыйтма йачĕç. Коротков хăйĕн тахçанхи тусĕсене ăшшăн кĕтсе илчĕ, хăйне çакăн пек пысăк шанчăк панăшăн вĕсене тав турĕ. Округри суйлав комиççийĕ Сергей Ксенофонтович Короткова, ПСК(б)П членне, Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх кандидата регистрацилерĕ.

Коротков хăйĕн йалĕнчен уйăрăлса пурăнма, ĕçлеме Шупашкар хулине, республикăн столицине куçса кайни икĕ ерне ытла иртрĕ. Анчах вăл Колјцовкăна час-часах телефонпа шăнкăртаттарать, ăна йал пурнăçĕнчи кашни вак-тĕвек интереслентерет, вăл колхозри типографинче пичетлевекен „Сталинец" хаçат валјли хут шыраса тупма пулать. Коротков халĕ те Колјцовкă çинчен калаçнă чух, малтанхи йалапа: „пирĕн", „епĕр тăвăпăр", темесĕр калаçаймасть. Анчах кайран çеç аса илсе, васкавлăн: „вĕсен", „вĕсем тăвĕç" тесе тӳрлетет.

Ирхине ултă сехетре, тĕттĕмле, Коротков Тĕпĕçтăвкома çитет. Вăл ир тăма вĕреннĕ те ĕçлемесĕр пĕр минут та иртерме пултараймасть. Государствă ĕçĕн аслă çулĕ çине кĕнĕ Сергей Коротковăн пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Коротковăн хăйĕн пĕтĕм кунçулĕ урлă тытса пынă пысăк идейлăхĕ, унăн чăн-чăн организаторла таланчĕ ăна, çамрăк колхоз председателне, çакăн пек çӳлĕ пост йышăнма тивĕçлипе май пачĕ. Çав пахалăхсемшĕнех ăна суйлавçăсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

С. Лаписова.

„Комсомольская правда"

Франци пичетне пăхса тухни

Францири фашисла вăрттăн каварлăх

Республикăна хирĕç тунă фашисла вăрттăн кавар çинчен Франци хаçачĕсем çĕнĕ те çĕнĕ материалсем пичетлеççĕ. Парижре тата провинцире хĕçпăшал пытарса усранă пысăк складсене уçса палăртас ĕç пырать. Çав хĕçпăшала мĕн пур фашисла лигăсен „хăймине" пĕрлештернĕ „Вăрттăн оборонă лиги"—террорла организаци тытса тăнă (хăшпĕр хаçатсем ăна „кагулјарсен" организацийĕ теççĕ).

Вăрттăн кавара, хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ăнсăртран уçса палăртнă. Швейцари пограничникĕсем октăбĕрте Франци чикки çывăхĕнче çĕр çинче йăваланса выртакан патронсем тупнă. Пĕр вăхăтрах Франци пограничникĕсем те çавăн пек патронсемех тупнă. Следстви тапрансан Парижре пурнакан Жакӳбийе хушаматлăскере тытнă. Ун çумĕнче хутсем тупнă, çав хутсенчен вăл темиçе адрĕспе хĕçпăшал тăратни курăннă. Жакӳбийе клийенчĕсĕн хисепĕнче Дйеппе хулинче пурнакан Ансо тăнă, вăл строителствă йенĕпе подрйадчик пулса ĕçленĕ, „Боевые кресты" йатлă вырăнти организаци руководителĕ пулнă.

Ансо патĕнче тата унăн пĕр служащи патĕнче обыск туни влаçсене йĕр кăтартса панă. Ансо патĕнче темĕн чухлĕ счотсем, накладнойсем тата ытти документсем тупнă, вĕсем подрйадчик çар строителстви йенĕпе пысăк ĕçсем туни çине кăтартса панă. Çар министерствинчен тата ытти ведăмствăсенчен ыйтса пĕлнĕ. Ансо нимĕнле хысна подрйадне те туман иккен. Ансоран илнĕ адрĕссем тăрăх обыскcем пуçланнă—халјхи вăхăта обыскcем тума 450 ордер панă, следстви оргăнĕсем 700 ĕç пуçланă. Малтанхи кунсенчех чи кĕтменле резуљтатсем килсе тухнă. „Вăрттăн оборонă лиги" пит тĕплĕн, ĕçе лайăх пĕлсе чăн-чăн граждăн вăрçи хатĕрленĕ, вăрăм вăхăта вăрçма шутласа хунă пулнă. Хĕçпăшал склачĕсемпе пĕрлех çĕр айĕнче касаматсем, госпиталјсем тата... тĕрмесем те тунă.

„Пари судар" хаçат Рибер урамĕнчи, 37-мĕш № çуртри фашисла укреплени çинчен çырса пĕлтерет.

„Унта,—тесе çырать хаçат,—тотсен стклĕпе тунă особнјак пур. Çавăнта çемйелĕ пансион вырнаçнă, 25 çынна йахăн вăтă майрасем, пуринчен ытла тăлăх офицер арăмĕсем пурăннă. Полици влаçĕсем малтанхи касах çав çуртра питĕ интереслĕ находкăсем çине тăрăннă. Унта пур çĕрте те пекех çав тери нумай хĕçпăшал тата патрон пытарнă, кӳ запассене тийесе тухма виçĕ грузовик кирлĕ пулнă.

Пĕр кĕтменлĕх хыççăн тепри сиксе тухнă. Полици инспекторĕсем особнјакăн вăрттăн вырăнĕсене пăхма тытăннă та, пур çĕртен те хĕçпăшал тупа-тупа кăларнă. Унта сахалтан та 100 пин патрон, автоматлă винтовкăсем чылай, 500 пулемйот, пулемйот-зениткăсем пулнă, тесе çирĕплетсе калаççĕ. Пурте вĕсем çĕнĕ, пурне те лайăх сĕрсе, тĕплĕн йĕркелесе хунă, номĕрсем лартса тухнă. Ултă йешчĕкре 30-шар гранат тупнă.

Анчах ку пурте мар-ха. Полицейскисем подвала кĕрсен çав тери хытă тĕлĕнсе кайнă. Вĕсем вара çав особнјака пĕтĕмпех, авантӳрăлă филјмсем лартакан киностудири ателйе пек, трук çинче туса лартнине ăнланса илнĕ".

Полицейскисем стенасене шаккаса пăхма тытăнсан, тет малала хаçат, пĕр стенин хăрах пайĕ шарнир çинчи пек çавăрăнса тăнă, унта пулнисен куçĕ умне тимĕрпе бетонран тунă пысăк мар пӳлĕм курăнса кайнă. Пӳлĕмĕн тăршшĕ 3 метр, урлăшĕ 2 метр. Секрет çакăнта пулнă: стена çинче аран-аран палăракан пĕчĕк рычак пулнă, çав рычака пуссан кирпĕчпе витсе тунă тимĕр алăк уçăлса кайнă. Çав 50 сантиметр хулăмĕш стеналă пӳлĕм çар карапĕсенчи пек чăн-чăн командлă пост пулнă.

Малала обыск туса, 15 килограм туртакан пачкă тупнă. Пачкăра „шеддит" йатлă персе сиктерекен йапала пулнă, ăна йĕри тавра асбестпа чăркаса хунă. Парижри муниципаллă лаборатори директорĕ Клен каланă тăрăх, çав пачкă пĕр квартăла сиктерсе йама çитнĕ пулнă.

Çав касаматран хула канализацин пысăк пăркисем тăрăх тухмали вырăн пулнă, теççĕ „Пари суарпа "ытти хаçатсем. Касаматра тулала, урамала тухакан телефон проводкисене обыск вăхăтĕнче такам татса кайнă. „Се-суар" хаçат çавна май çапла хушса калать: шăпах çав особнјакпа тĕлме-тĕл Итали посолјствин паллă чиновникĕ пурнакан çурт ларать, тет.

Интереслĕ йапала: обыск тунă вăхăтра особнјак патне хĕçпăшал тийенĕ грузовик пырса тăнă. Грузовикне тата шоферне йарса тытнă.

Ротру урамĕнче, 2-мĕш çуртра, тесе пĕлтереççĕ „Еврпа" „Се-суар", темĕнле Маулер тытса тăракан антикварлă (кивĕ хаклă йапаласемпе сутă тăвакан) магазин пур. Çавăнта полици çитсе кĕрсен, çакăн йышши „кивĕ йапаласем" тупнă: Германи производствинчен тухнă 45 пулемйот, 134 винтовкă, 20 пин патрон, салтак сумкисем т. ыт. çар хатĕрĕсем. Малалă обыск тусан питĕ нумай çар обмундировани, 50 автоматлă винтовкă—Германири Шнеффер фирми туса кăларнă çĕнĕ те лайăх сĕрнĕ винтовкăсем—ухатана çӳремели 50 пăшал, патрон тултарнă йешчĕксем т. ыт. те тупса кăларнă. Йĕрлесе пĕлнĕ тăрăх, „антиквар" Маулер „Вăрттăн оборонă лигин" сектăр начальникĕ пулнă. Политикăлă полици директорĕ каланă тăрăх, Ротру урамĕнче обыск тата темиçе кун пымала, мĕншĕн тесен çурт подвалĕсене йурпйех тĕрлĕ материалсемпе тата кивĕ ăптăркаптăрсемпе тултарса лартнă, çапла вара „полицейскисен çав подвалсенче окопри пек чакаланмала пулать". Ротру урамĕнчи çурта Рибер урамĕнчи пансионат пекех туса пĕтерне.

Ампер урамĕнче, 20-мĕш № çуртра, гараж пур; çав гараж айĕнче, Рибер урамĕнчи подвал пекех, туса пĕтермен подвал тупнă. Темиçе çурт урлă хайхи гаража тытса тăраканăн особнјакĕ ларать—унта вăрттăн тунă госпиталј тупнă. Госпиталĕн санитари материалĕсем нумай, аманнисене çĕклемели 17 носилка пулнă.

Рӳелре, Париж çывăхĕнче, Ља Фӳте çуртĕнче, полици влаçĕсем уçса палăртнă йапаласем çакăн çине кăтартса параççĕ: фашисла вăрттăн кавар тăвакансем тĕрмесем тăвас тăрăнах пăхса хунă.

„Подвалта вăрттăнлăха кĕмели ансăр алăк хыçĕнче, — тесе пĕлтерет „Попюлер", — 3 метр тăршшĕ хĕсĕк коридор тупнă. Коридорăн сулахай йенче пĕчĕк чӳречелĕ иккĕмĕш алăк уçăлать—чăн тĕрме камерĕн алăкĕ... Чăнахах та вăл камерă иккен, унта койкă ларать тата стена çумне икĕ тимĕр ункă пăраласа лартнă—сăнчăрпа çыхса лартнă çынна тытса усрама кирлĕ пурте пур. Уççăн паллă, çав шăпкал çĕр айĕнчи тĕрмере çынсене

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Суйлав спискисем пирки

Çĕмĕрле хулинчи суйлав участкинче суйлавçăсен спискине курăнмала çĕре кăларса çакнăранпа участкăсене çынсем нумайăн пухăнма пуçларĕç. Спискăсем çакнă вырăнтан çын татăлмасть. Кашни йех йе хăйне йе çемйери суйлама çул çитнĕ çынсен хушамачĕсем спискăра пуррипе çуккине тĕрĕслет.

Суйлавçăсен спискисене тĕрĕс туса çитерне теме çук-ха. Суйлав çасен спискисене тĕрĕсленĕ хыççăн, кашни участкăра пекех спискă çине кӳртмесĕр хăварнисем, тӳрлетсе çырнисем т. ыт. палăрас çĕ. Акă 5 мĕш участкăра 1919 çул та çуралнă Михаил Костров йачĕ тĕлне „1913 çулта" çуралнă, тесе паллă тунă. Никифоров Андрей йатне „Никоноров Андрей" тесе çырнă. „Труженик" заводри фанернăй цехра ĕçлекен Дубовăн йачĕ спискăра пачах çук. Вăтам шкулта вĕренекен Нина Ташкина „Труженик" заводăн общежитийĕнче пурăнать. Унăн ĕнтĕ суйлама çул çитнĕ, 5-мĕш участкăра суйламала. Анчăх ун йачĕ те спискăра çук. 2-мĕш участкăра Лингадова Раиса суйлавçăн ашшĕ йачĕсене çырмасăр хăварнă. Немцев Федор, Троицкий, Токсубайев йачĕсене пĕрре хуратнă та тепĕр хут тӳрлетсе çырнă. Варламова Феодора суйлавçăн йатне пăсса Феодосийа тесе çырнă пулнă. Вăл спискăра хăй йатне пăсса çырнине курсан, çийĕнчех тӳрлетме ыйтса округри суйлав комиççине зайавлени парать. Анчах комиççи секретарĕ Грачов „Федосийа" тенине тӳрлетсе „Феодора" çырас вырăнне, ашшĕ йатне пăсса хурать. Малтан тĕрĕс пулнă „Герасимовна" тенине хуратса „Игнатйевна" тесе çырса хурать.

Больницă çумĕнчи 7-мĕш номĕрлĕ суйлав участкинче суйлавçăсен спискине йурийех пытарса хунă пек комнатă алăкĕ хыçне çапнă. 7-мĕш участкăрах комиççи членĕсене черетпе дежурствă тăратассине организацилемен. Пур участкăсенче те комиççи членĕсем çурçĕр иртни пĕр сехетчен ларассĕ пулсан, 7-мĕш участкăра каçхине никам та пулмасть.

Г. Семенов.

Малта пыракан суйлав участки

Вăтакасри (Вăрмар округĕ) суйлав участки суйлава хатĕрленессипе чи малта пыракан участкăсенчен пĕри пулать.

Вăтакас участкинчи суйлавçăсем суйлава государствă умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех парса татнипе кĕтсе илессĕ. Суйлав шкул çуртĕнче пулса иртет. Суйлавçăсем пухăнмали çуртсене çуса тасатса хунă. Тăвата пӳлĕм туса хатĕрленĕ. Стена çинче суйлав çинчен ăнлантаракан плакатсем çакăнса тăрассĕ. Суйлав кунĕ валĕçи лампăсем, краçынсем хатĕрленĕ. Ваттисене, ачалă арăмсене суйлав суртне илсе пыма 10 лаша уйăрса хунă. Колхозри ачасен йасли валĕçи продуктăсем хатĕрленĕ. Буфетра чей, сушкă, канфетăсем пулассĕ. Халĕхи вăхăтра суйлав саккунне ăнлантарассипе 21 агитатор ĕçлет. Герасимов Петр ватă колхозник чи лайăх агитаторсенчен пĕри. Ăна колхозниксен аслă пухуве доверенăйа суйланă. Халĕхи вăхăтра вăл уйрăмăнах кандидатсемшĕн агитацилет.

В. Вишневский.

Пăсăлса кайнă коммуниска çинчен

Анастасийа Никонова чылай вăхăт хушши Шăхасан районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса пурăнчĕ. Вăл парти ретĕнче тăрать пулсан та колхоза тата совета хирĕçле ĕçсем туса пычĕ. Колхозра конюхсене тата бригадирсене хăйне çывăх çынсене лартса колхоз пурлăхне салатса пычĕ. Государствăна кайаш тырă парса ултала та тăчĕ.

Никонова колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра вăл йалху çалăх ертел уставне пăсса ĕçлени çинчен тата ытти тĕрлĕ ирсĕрле ĕçсем çинчен районри организацисене темиçе хут та пелтерне. Анчах та районри организацисем çав ĕç çине çавăрăнса та пăхман. Районĕçтăвком председателĕ пулса ĕçленĕ Ванеркке кĕретĕнех Никонова А. хӳтĕлесе пынă.

Никоновăн киревсĕр ĕçĕсене тӳсеймесĕр колхозниксем çак çулти февралĕн 25 мĕшĕнче ăна колхоз председателĕнчен каларчĕç. Савах та, колхоз председателĕнчен кăларнă хыççăн та, Никонова колхоз ĕçне салатса йарассишĕн ĕçлеме пăрахмарĕ. Халĕ вăл йалти активиссем çине тапăнса пурăнать, вĕсене тем тĕрлĕ сăмахсем каласа кӳрентерет.

Çавăнпа та, парти йенĕпе пăсăлса кайнă Никонова ĕçне халех пăхса тухса вăл малашне парти ретĕнче йулма пултарасси çинчен сӳтсе-йавма кирлĕ.

Николайев.

Ată-пушмак йусакан мастерской

Шупашкарти „Кожупряжь" ертелĕ кăçал çулла тĕп библиотекăпа йунашар, Чебоксарка шывĕн хĕррине, ата-пушмак йусама йа тарласах мастерской туса лартрĕ.

Мастерскойĕнче ата-пушмак йусакансем 4 çын. Вĕсем хастарлăн ĕçлессĕ. Акă октабĕр уйăхĕнче вĕсем мĕн пурĕ 650 мăшăр ата пушмак йусанă. Заказ паракан çынсене нумай кĕттерсе тăмассĕ. Ĕçлемели нумайрах пулсан, 3—4 кун хушши тытассĕ. Тепĕр чухне çийĕнчех, хуçи умĕнчех те йусаса парассĕ.

Халĕ мастерскойне пуринчен ытларах кăçат таврашсем илсе пырассĕ. Нойабĕрĕн 1-мĕшпе 20-мĕш хушшинче 190 мăшăр çăмата йусанă.

В. А.

Сатран пысăк тупăш

СĔНТĔРВĂРРИ. Уракăвă йалĕнчи С. М. Буденный йачĕпе тăракан колхозăн 20 гектар çинче улмуççи сачĕ пур. Вăл сатран колхоз кăçал пысăк тупăш илчĕ. Улмуççисене сийенлекен хурт-кăпшанкăсене çийĕнчех пĕтерсе пынипе, кăçал йавăçулмисем лайăх, шултăра çитĕнчĕç. Халĕ йавăçулмине колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пачĕç. Анисппа антоновкă суртла йавăçулмисене кооператива сутса, колхоз 4.800 тенкĕ тупăш илчĕ.

В. В.

ФранциРи фашисла вăрттăн каварлăх

(Йулашки)

вĕсем кăшкăрни тула илтнесрен хăрамасăр, хупса усрама пултарнă. Кунта—тесе, пĕтерет хаçат,—çынсене асаплантарса вĕлерме те пултарнă".

Франци вăрттăн каварçисен укçа-тенкипе çыхăнувĕсене илсе, „Попюлер" çапла çырать:

„Вĕсен организацийĕ тивĕçлипе хатĕрленĕ çынсенчен тăрать. Çав организаци мĕнле хĕçпăшалпа хĕçпăшалланни тата вăл вăрçа мĕнле хатĕрленни, унăн питĕ нумай укçа-тенкĕ пуррине кăтартса парать. Вывăд хăйех тухса тăрать: вăрттăн кавара хавхалантараканĕсем тĕмĕнлех пуйан та хăватлă пулсан та, вĕсен капиталĕсем çавăн пек организацийе тытса усрама пачах çителĕклĕ мар пулнă пулĕччĕ. Çав предприйатийе укçа парса тăрас ĕçе чикĕ леш йенчи державă йе тĕрĕс рех державăсем хутшăнмала пулнă. Анчах вĕсем укçа-тенкĕ парса пулăшнипех чарăнса тăнă-и? Çук, тесе шухăшламала. Плансем тăвас, тен, вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре те, йутçĕршыв специалисĕсем активлăн хутшăннă пек курăнса тăрать".

Халăх фронтне кĕрекен партисен хаçачĕсем пурте пĕр саспа çакăн çине кăтартса парассĕ: фашиссене валĕçи çĕршыва темĕн чухлĕ хĕçпăшал кӳрсе тăни çинчен епĕр нумай уйăх хушшинче пĕр хут кăна мар асăрхаттарнă. Хĕçпăшал тăратакансен хушамачĕсене каласа панă, уйрăмăн илсен, хĕçпăшалпа суту-илӳ тăвакан Бельги суту-илĕçи Фромон, Германи çар завочĕсен представителĕ (Тӳрунгире), çавăн пекех тата Италири Баретт фирмин представителĕ (Генуйара) пулса тăраканскер çине, кăтартса панă, тессĕ.

Сулахай пичет Франциri „Черный легион" ĕçĕ çинчен илсе кăтартнă фактсем çав тăрă шыв çине кăларса пыракан йапаласемпе уйăрăлми çыхăнса тăрассĕ. „Черный легион"—вăл шпионла-диверсилĕ центр, унта Гестапо агенчĕсем, Итали „ОВРА" охранкин агенчĕсем тата Испани пăлхавçисен агенчĕсем пĕрле ĕçлессĕ. Парижре Рибер урамĕнчи „семйеле пансионра" та, Биаррицири „Большой фрегат" йатлă виллăра та (унта нумайах та пулмасть шпионла организаци тупса палăртнă, унăн филиалĕсем пĕтĕм çĕршыв тăрăх тăнă) хăйсен умне пĕр задачă лартнă пĕр тĕслĕ вăйсемех ĕçлессĕ. Вĕсем Франци халăхне хăйсен тата йутçĕршывсенчи фашиссен пусмăрĕ айне кĕртсе пăрахасшĕн. Вĕсем Франци республикĕнче Испанири пек фашисла авантюрă пуçласа йарасшăн.

(„ПРАВДА", 1937 ç. нойабĕрĕн 22-мĕшĕ).

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансем совет сучĕ умĕнче

Айăпланакан Спиридонов допросĕ

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче, кăнтăрлахи ларура, суд председателĕ Семенов йулташ айăпласа çырнине вуласа парсан, айăпланакан М.Ф. Спиридоновран допрос тума пуçлассĕ.

Айăпланакан Спиридонов малтанах хăйĕн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен каласа парать. Вăл 1895 çулта Аксу-пай районĕнче (Тутар республикĕ) вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Хусанти духовнăй семинаринче вĕренсе тухнă. Суд председателĕ—вăтам хресчен ачи мĕнле майпа духовнăй семинарине кĕме пултарни çинчен ыйтсан, вăл: маншăн „исключени" пулнă, тесе ответлет. Духовнăй семинарине кĕме Спиридоновшăн мĕншĕн „исключени" пулни паллă ĕнтĕ: унăн ашшĕ çулсерен 700 пăт тырă туса илнĕ. Революциччен вăтам хресчен хăçан çавăн чухлĕ тырă туни пулнă?

Спиридонов сулахай социалиссен членĕнче тăнă. 1918 çулхи август уйăхĕнчен пуçласа 1919 çулхи нойабĕре çитиччен Колчак çарĕнче пулса, Хĕрлĕ çара хирĕç çапăçнă. Шуррисен çарне хăй ирĕкĕпе кайнă. Хĕрлĕ çар Омск хулине туртса илсен, Спиридонов хĕрлисен алли не тыткăна лекнĕ. Хĕрлĕ çарта 6-мĕш армин автопаркĕнче шофер помошникĕ пулса ĕçленĕ. Вăл хĕрлĕ çара хăй ирĕкĕпе кайнă пек кăтартасшăн.

Хĕрлĕ çарта Спиридонов ултавлă майпа парти ретне кĕнĕ.

Революциччен те, революци хыççăн та Спиридонов контрреволюцилĕ националисла „Хыпар" хаçат редколлегинче тăнă. Çав контрреволюцилĕ листок уççăнах совет влаçне сирпĕтсе антарма чĕннĕ, Учредителĕ собранишĕн тăрăшнă. Вăл, Спиридонов, чăваш националисĕсен контрреволюцилĕ сйесĕсенче хутшăнса ĕçленĕ. 1918 çулхи йанвар уйăхĕнче ес-ерсем Хусанта пĕтĕм чăвашсен контрреволюцилĕ çар сйесне пухнă, вăл сйесра Спиридонов та пулнă.

1921 çулта Шупашкара ĕçлеме килсен тӳрех „чăваш крайне тĕпчекен обществăн" членне кĕнĕ.

Прокурор ыйтусене тӳртĕн лартсан, Спиридонов „пĕлместĕп", „астумастăп" тесе ответлет. Анчах тӳрĕ ответсенчен пăрăнасшăн темле тăрăшсан та, прокурор тĕпчени Спиридоновăн ĕлĕкхи „ĕçне" уççăн сутатса парать. Спиридонов—буржуалă националис, ес-ер, контрреволюционер пулнă, революци вăхăтĕнче, граждăн вăрçи тапхăрĕнче совет влаçне хирĕç кĕрешнĕ.

Граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн Спиридонов, влаçăн вырăнти оргăнĕсен хăшпĕр руководителĕсем политикăлă сыхăлăхлă пулман пирки государствă учрежденисенче йертсе пыракан вырăнсене кĕрсе кайма пултарнă. Партине ултавпа кĕнĕскер, вăл нихăçан та коммунис пулман. 1929 çулта ăна партирен кăларса çапнă.

1929 çултан пуçласа 1935 çула çитичен вăл Хусанта ветеринарипе зоотехникă институтĕнче вĕреннĕ тата Хусанти йалхуçалăх институтĕнче аспирант пулса ĕçленĕ чухне Фоминпа, Кудрйавцевпа Винтайкинпа (халĕ ареслене халăх тăшманĕсемпе) тачă çыхăну тытнă. Кудрйавцев хватерне темиçе хут чен те кайнă, лешĕ те Спиридонов патне час-часах пынă. Кудрйавцев Хусанта контрреволюцилĕ ушкăнăн руководителĕ пулнă. Спиридонов Шупашкарта ĕçленĕ чухне Хусана кайсан Кудрйавцев хватерне кĕнĕ. 1932 çулта Хусанта ветеринари институтĕнчен студентсем вĕренсе тухнă май Спиридонов хватерĕнче вечĕр пулнă. Вăл вечĕре Винтайкин та пынă. Контрреволюцилĕ ĕçшĕн вырăнтан кăларса çапнă хыççăн, Спиридонов Винтайкина Шупашкара Çĕрĕç халăх комиссариатне ĕçлеме илсе килнĕ (1935 çулта). Анчах уйăх çурă ĕçлесенех Винтайкина арĕсленĕ.

Спиридонов çавăн пекех Фомин троцкиспа йăлара çыхăну тытнă, пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ. Халăх тăшманĕпе—Арбатовпа та йăлара çыхăнулă пулнă.

Республикăри чи лайăх фермăсем çинчен очĕрксем çырма тесе Спиридонов, кулакла „поэта"—Рзайа пин тенкĕ укçа панă. Лешĕ вйçĕ пуслăх та çырман. Çавăн пек салатнă тăшмансем государствă укçи-тенкине.

Унтан прокурор, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче ĕçленĕ вăхăтра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре Спиридонов мĕнле сăтăр туса пурăнни çинчен ыйтма пуçлать.

Спиридонов тӳрĕ ответран пăрăнса, хăшпĕр ыйтусене йурийех илтмĕш пулать, ответлемесĕр тытăнса тăрать, хăй нервнăй пулни çинчен пĕлтерет йе хĕрсе кайса лекци вулама пуçлать.

— Правителствă республикăна мĕнле ăратлă такасем илсе килме йышăннă?

— Цигай ăратлисене.

— Есĕр мĕнлине илсе килнĕ?

— Цигай-меринос, Прекос, Гемпшир т. ыт.

Малалахи допросран çакă курăнать: колхоз фермисенче выльăхсене ăратлантарассине аркатас тесе, Спиридонов чылай начар ăратлă такасем кӳрсе килме план тунă. Кӳрсе килнĕ такасене фермăсем тăрăх валеççен, пĕр хуçалăхра темиçе тĕрлĕ йăх пулса тăнă. Çапла вара сурăхсен ăратти пăтранса кайнă. Сурăхсен таварлăхĕ чакасси, çăм сахалрах тухасси çакăнтан килнĕ те.

Ăратлă сыснасем вырăнне Литваран ахаль сыснасемех илсе килнĕ те, вĕсене фермăсем тăрăх валеççе панă, çав вăхăтрах фермăсенчи лайăхлатнă сыснасене сутса пĕтерне. Литваран кӳрсе килнĕ сыснасен ăратне кăтартакан свидетелствă пулман пирки, вăл сыснасене Государствăн ăратлă выльăх кĕнеки çине кĕртмен, çавăн пирки фермăсене аш-какай тăратас обйазателствăран хăтараман. Вăл обйазателствăна тултарма фермăри мĕн пур сыснасен хисепĕ те çитмен. Çапла ĕнтĕ сăтăрçăсем фермăсене пĕтерсе лартасси патне илсе çитерне.

Республикăна чирлĕ выльăхсем кӳрсе килнĕ. Хăрушă чирсемпе выльăхсем нумай вилнĕ. Çакна Спиридонов „вагинит хăрушă чир мар, выльăхсем апат çуккипе вилнĕ" тесе ăнлантарать. Анчах апла пулсан выльăх апачĕ ытларах пултăр тесе мĕн тунă-ха? Çĕрĕç халăх комиссариатĕнчи сăтăрçăсем выльăх апатне йурийех сахал тума тăрăшнă.

— Выльăх апачĕ çинчен калаçу пуçлансан, нарком пулнă А. Васильев йаланах:—çĕр вăл резинă мар ăна туртса сарма пулмасть, тесе калатчĕ,—тет Спиридонов.

— Çакна хирĕç есĕр мĕн каланă?

— Епĕ чĕнмен, вăл контрреволюци мар, тесе шутланă.

Çĕрпӳри ветеринари пунктĕнче выльăхсене прививкă тумали материал 51 килограм пулнă, вăл йăлтах ерукĕ тухнăскер пулнă. Спиридонов çавна пĕлетĕр-качах пăрахăçламан. 1935 çулта прививкă тумали 2 йешчĕк материал килнĕ, вăл Çĕрĕç комиссариачĕн складĕнче шанса пăсалнă. Çак сăтăрла ĕçсем пурте Спиридонов куçĕ умĕнчех пулса пынă.

— Выльăхсем йерекен хăрушă чирсемпе чирлени çинчен вырăнсенчен сигналсем пулсан есĕр мĕн тунă?

— Мускавран сиплемели материал ыйтнă.

Чирлĕ выльăхсене питĕ хăварт сиплес, чир саракан вырăнсене часрах хăрушсăрлатас, пĕтерсе лартас вырăнне, сăтăрçăсем вăхăта йурийех тăсса, вăраха йарса пынă, чирпе кĕрешем пекки туса, чир йăвисене сыхласа усранă.

Чăваш АССР Государствă план комиççи кăларакан „Социалистическое хозяйство" журналăн 1936 çулхи май уйăхĕнче тухнă номĕрĕнче Спиридоновăн статйа пур. Çав статйара вăл выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес ыйтăва йурийех шарламасăр хăварнă, метизаци планне республикăра 7—8 çулта тин пурнăçа кĕртме пулать, тесе çырнă. Спиридоновăн сăтăрла сăн-сăпачĕ çакăнтан та лайăх курăнать ĕнтĕ.

Айăпланакан Павлов допросĕ

Каçхи ларура айăпланакан Павловран допрос тăвассĕ.

Председател: — Ăратлă выльăхсене пĕр системăсăр кӳрсе килни пулнă-и?

Павлов: — 1936 çулта пулнă.

— Кам айăплă уншăн?

— Планне Спиридоновпа нарком пулнă А. Васильев тунă.

— Ун çинчен есĕр кама та пулсан систернĕ-и?

— Çук çав, никама та шарламан.

— Ăратсене кăтартмасăр, выльăхсем кӳрсе килме кам зайавкă панă?

— Чăвашплемзаготконторă, управляйушчийĕ Шулов.

Республикăра метизеци ĕçĕ арканса кайнă. Вырăнти ăратсăр такасене кастарман, çапла тунипе ăратсем хутшăнса кайнă. Ăратлă выльăхсене Государствăн ăратлă выльăх кĕнеки çине кĕртмен.—Вăл документсене тĕрĕслеме манăн вăхăт пулман,—тет айăпланакан Павлов.

— Республикăна чирлĕ выльăхсем кӳрсе килни пулнă-и?

— Пулнă.

— Есĕр мĕнле мерăсем йышăннă?

— Епĕ вĕсене сиплемен.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç Управленийĕ (начальникĕ Павлов пулнă) чăх-чĕп ĕрчетес ĕçе пĕтерсе лартма тăрăшнă. Инкубатарлă станцисем вальĕи йурийех сăмарта хатĕрлемен. Кашни станци сезон вăхăтĕнче 105 пин чĕп кăларма пултарать, анчах сăтăрçăсем йурийех пĕчĕк план тунă (30—40 пин сăмарта). Çакă вăл чĕпсен хакне ӳстерсе йанă (пĕр чĕпĕ 18 тенке ларнă!).

— Выльăх апачĕ хатĕрлемели план тунă çĕре хутшăнса ĕçленĕ-и есĕр?

— Хутшăнса ĕçленĕ.

— Вăл план тăрăх, выльăх апатне пачах сахал хатĕрлеме палăртнă. Вăл план выльăх-чĕрлĕх хисепĕнчен уйăрăлса кайать. Мĕншĕн?

— Епĕр выльăх апатне çителĕклĕ пулмала план тунă. Анчах нарком пулнă А. Васильевпа Госплан председателĕ пулнă Г. Иванов епĕр тăрăнă апат норминчен хăраса ӳкнĕ, епĕр ун чухлĕ выльăх апачĕ тупма пултараймастпăр, тетчĕç. А. Васильев выльăхсен хисепне, апат мĕн чухлĕ пур таран çес хăварса, чакарма сĕнчĕ.

— Васильевăн çавăн пек установкине мĕн тесе каламала?

—„Предел теорийĕ" темеле. Вăл выльăхсен хисепне чакарма сĕнни пачах сăтăрла установкă пулнă.

— Çакăн çинчен есĕр кама та пулсан пĕлтернĕ-и?

— Пĕлтермен. А. Васильев хушнă тăрăх, выльăх апачĕ хатĕрлемели плана темиçе хутчен те улăштартăмăр (виçĕ вариант турăмăр), кашнинчех йе выльăхсене тăрантармали апат нормине чакаратпăр, йе апат сахаллине кура республикăри выльăхсен хисепне чакармала тăватпăр. Пире хушнă—епĕр итленĕ.

Сăтăрла плансем туса, Спиридоновпа Павлов выльăх-чĕрлĕхе апатсăр тăратса хăварма тăрăшнă. Пусуçавăрнăшне выльăх апачĕ тумала пултăр тесе йĕркелес, уйхире курăк акас, кĕтӳ çӳретмели вырăнсем тăвас тесе тăрăшман çеç те мар, тата улăх-çарансене те пĕтерсе лартасшăн пулнă. Сăмахран, 1935 çулта Йелчĕк районĕнче йулашки 800 гектар улăха сухаласа тăкнă. Сăтăрçăсем тунă план тăрăх 1942 çулта (виççĕмĕш пйатилеткăн йулашки çулĕнче) республикăра выльăха тăрантарма 32,1 пин тоннă тĕштыр, 22,8 пин тоннă тымарçимĕç, 16,6 пин тоннă утă, 791,6 пин тоннă чĕркурăк тата 224,2 пин тоннă çилос çитмест.

* * *

Çакăнпа судăн каçхи ларуvĕ хупăнать.

Колхоза кĕрессĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—суйлав кунĕ çывхарса килни пĕтĕм халăха хавхалантарать.

Аслă Совета суйлама хатĕрленнĕ май Нĕркеç йалĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхоза 5 хуçалăх кĕчĕç. Вĕсене колхозниксен çемйине ăшшăн йышăнса илчĕç.

Декабĕрĕн 3-мĕшĕнче, каçхине сехетре Колхозник çуртĕнче Шупашкар хули Совечĕн финанс секцийĕ пленум туса ирттерет.

Кун йĕркинче:

1. ПСК(б)П Облăçри Комитечĕ „Финанс ĕçĕ çинчен" йышăннă решени çинчен
2. 1938 çулхи налога регистрацилесси çинчен.

Финанс секцисен пур членĕсене те, учрежденисенчи, организацисенчи руководителсене тата бухгалтерсене, общестăлă инспекторсене, зайом тата страховкă тăрăх ĕçлекен уполномоченнăйсене, хула урам комитечĕсен председателĕсемпе секретарĕсене тата килхуçи хĕрарăмĕсен активне пленуме пыма чĕнессĕ.

ХУЛА СОВЕЧĔ, ФИНАНС ПАЙĔ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Национальнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Национальнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕн адресĕ çапла:

Шупашкăр хули, Чувашскайа урам, 6-мĕш № çурт (Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çурчĕ).

ТЕЛЕФОНСЕМ:

Председателĕн—6—59, 5—31 тата 5—24.
Секретарĕн—5—24 тата 0—02.
Ответлă исполнителсен—0—66 тата 0—55

Профдвижени шкулĕ

ЛАЙĂХ ЛАША СУТĂН ИЛЕТ ТАТА ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ

повăр помошникĕ КИРЛĔ

Адрес: Шупашкар хули, Плеханов урамĕ, 27-а. Телефон № 8—45.

Чуварлейри санаторине

квалификацилĕ медсестрасем

тата санатори условийĕсенче физкультурă ĕçне пĕлсе тăракан

КУЛЬТРАБОТНИК КИРЛЕ

Ĕçукçине 1935 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче йышăннă саккун тăрăх тӳлессĕ, тата коммуналă услугă пулать.

3—3 ДИРЕКЦИ.

СОЙУЗЗАГОТКОЖ-ăн

ВЫЛЬĂХСЕНЕ ПУСМАЛИ ПЛОШЧАДКИСЕМ

выльăхсене пусса пама йышăнассĕ:

мăйракалă шултра выльăхсене, сыснасене, сурăхсене, пăрусене тата ыттисене те.

Йалсенчи плошчадкăсенче выльăх пусса панăшăн кашни пуçшăн çакнашкал илессĕ: шултра выльăхшăн 2 т. 50 пус, сыснашăн . . . . 1 т. вак выльăхшăн . . — 75 пус.

Плошчадкăсенче выльăхсене опытлă пусакансем пусассĕ. Выльăх хуçи—лайăх тирпейленĕ, пысăк суртлă аш тата лайăх сĕвнĕ тир илет.

Тир тата пуснă чух тухакан вак-тĕвексене (пыршă, мăйрака, чĕрне, тĕк, шăрт) плошчадкăрах сутăн илессĕ. Çавăнтах вăл сырйосене паракан сăран таварсем: подошвă, подметкă тата ытти таварсем илме пултарать.

Сойуззаготкож.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памассĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита №919 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.